ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

6 (4368) №, 2014, нарăс, 13 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ПИРĔН ЛАУРЕАТ

## Ăсталăх туптанать кунсерен

Юлия Адюкова кĕçĕн класранпах вĕренӳ отличникĕсен ретĕнче. Пурне те пĕлме ăнтăлакан хĕр ача пур çĕрте те хастар. Пултарулăхне кура «Тантăш» хаçатăн 2013 çулхи лауреачĕ ята та тивĕçрĕ.



Элиза ВАЛАНС.

Елчĕк районĕ,
Аслă Елчĕк.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

– Аннене, чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенне тата вулавăшра вăй хуракана Любовь Германовнăна, тав сăмахĕ калатăп. Вăл пирĕншĕн ялан тăрăшать. Хăй те мĕн пĕчĕкрен хаçат-журналпа туслă ӳснĕ, пире те çак ĕçе хаваспах явăçтарчĕ. Юратнă кăларăмсене укçи-тенкине шеллемесĕр çулсеренех çырăнса парать. Эпĕ те, çунат хушнăскер, тĕрлĕ заметка шăрçалатăп. Чăваш писателĕсен хайлавĕсенчи илемлĕх мелĕсене аса илсе хитре предложенисемпе усă курма тăрăшатăп. Çут çанталăк илемне те вĕсем евĕр сăнлама тăрăшатăп. Ун пек чухне мухтать анне. «Маттур, эпĕ вĕрентнисене шута хуратăн», – тесе хавхалантарать. Ак халĕ лауреат пулни те маншăн калама çук пысăк савăнăç, – хăпартланчĕ Юля йăл-ял çиçсе.

Хĕр ача нумай вулать. Каç енне хăй пӳлĕмне кĕрсе выртать те сасăпах вулать. Тепĕр чухне сисмесĕрех çывăрса та каять. Вăл шăплансан пиллĕкри Маша йăмăкĕ ун патне чупса пырать те каялла çил пек вирхĕнсе тухать.

– Ан-не-е-е, пирĕн Юля каллех юратнă кĕнекине ыталасах çывăрать! – тесе ахăлтатса кулма тытăнать. – Чим, кайса пулăшам-ха эпĕ ăна, кĕнекине илсе хурас та, утиялпа витсе хăварас. Атту шăнса кайĕ.

Хастар хĕр ача спортра та малтисен йышĕнче. Акă кăçалхи «Раççей йĕлтĕрĕ» район ăмăртăвĕнче виççĕмĕш вырăна тухрĕ.

– Малтанах чи пĕрремĕш пыраттăм, финиша çитесси те нумай юлманччĕ, шăп çав вăхăтра иккĕн иртсе те кайрĕç. Кулянтăм, кайран лăплантăм. Ара, çав-çавах çĕнтерӳ картлашки çине улăхма пултартăм-çке, – тет Юля.

Кашни кун çемйипех йĕлтĕрпе ярăнма çӳренисĕр пуçне эрнере икĕ хутчен Елчĕке бассейна васкаççĕ Адюковсем.

Пур çĕрте те пултарулăхĕпе палăракан хĕр ача журналист пуласшăн. Çавăнпа халĕ пушшех çыру ĕçĕнче ăсталăхне туптасшăн.

ТАНТĂШСЕМ

## Çут çанталăка юратакансем



Маша Егорова сĕтел хушшине лармассерен кукамăшĕн сăмахĕсене аса илет. «Çу кунĕ хĕле тăрантарать» каларăш паян та уншăн вырăнлă пулчĕ. Ахальтен мар паллах.

Ара, апатланнă хыççăн амăшĕпе иккĕшĕ хатĕрленĕ пан улми сĕткенне пĕтĕм кăмăлтан ĕçрĕ вăл. Авă кĕленче савăтри кăмпа çине те шухăша кайса пăхрĕ. «Вăрманта çӳресе кукамайпа мĕн тĕрлĕ кăмпа татмарăмăр пулĕ иртнĕ çул, хĕлле валли те иксĕмĕрех пĕçерсе хатĕрлерĕмĕр», – мăнаçланчĕ сасартăках савăта алла илнĕ май.

Çут çанталăк ытамĕнче пулма çав тери юратать Маша. Тен, çавăнпа та спорта чунтан парăннă. Юлташĕсемпе, пĕрле вĕренекенсемпе футболла, волейболла, баскетболла выляса чунне канăçлăх парнелет.

Пĕр класра ăс пухакан Даша Константиновăпа юлташлă вăл. Яланах пĕрле вĕсем. Шкулти обществăлла ĕçсене хастар хутшăнаççĕ. Юрра-ташша ăста пулнăран уявсенче те сцена çинчен анма пĕлмеççĕ.

– Даша тата çав тери илемлĕ ӳкерет. Тепĕр чух унăн ĕçĕсене пăхса ытараймастăп, – тет тусĕ пирки Маша хавхаланса.

Пушă вăхăтра хĕр ачасем тутлă апат-çимĕç янтăлама кăмăлласçĕ.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Йĕпреç районĕ,
Энтриел.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

*Паянхи кăларăмра:*

4 стр.  Тарăн пĕлӳллĕ Ваня

5 стр.  Чечек юратан пĕр тăвансем

10 стр.  Атом взрывĕ кĕскетнĕ кун-çул

# Чи пултаруллисем



Иртнĕ çул вĕçĕнче Шупашкарта Пĕтĕм Раççейри иккĕмĕш "Цветик-семицветик" телекурав фестиваль-конкурсĕ иртрĕ. Унта Етĕрне районĕнчи Тури Ачак шкулĕнче вĕренекенсем те хастар хутшăннă. Тĕрлĕ хуларан килнĕ ачасем сакăр номинацире тупăшнă.

Кăçал кăрлач уйăхĕнче вара çак фестивалĕн финалĕ пулчĕ. Гала-концерта çĕнтерӳçĕсене çеç чĕнсе илчĕç, чи пултаруллисен хушшинче Тури Ачак шкулĕн "Гармония" ташă ушкăнĕ те. Вĕсем "Хореография" номинацире эстрада тата ирĕклĕ ташăсемпе виççĕмĕш степеньлĕ лауреатсем пулса тăчĕç.

"Лейся, песня" ушкăнри Александра Иванова, Константин Степанов тата Ева Семенова солистсем вокалçăсен номинацийĕнче палăрчĕç. Александрапа Ева иккĕмĕш степеньлĕ лауреат, Костя дипломант ята тивĕçрĕç.

Сăвă вулассипе "Илемлĕ сăмах" номинацире "Çеçпĕл" ушкăна çӳрекен Наталья Яковлева, Алина Иванова тата Александра Иванова та лауреатсем пулса тăчĕç.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

**Сăн ӳкерчĕкре:** Çĕнтерӳçĕсем.

# Чемпионсем патĕнче: рекорд çĕнелет!

«Чăваш Республикин рекорчĕсем» кĕнеке кăларас пулсан Етĕрне районĕнчи Тури Ачака унта темиçе çитĕнӳпе те асăнĕччĕç. Вĕсенчен пĕри – çырăнтару ĕççийĕнчи кăтарту пулатчĕ. «Тантăш» тусĕсем, хавхаланса пĕлтерер: Ачаксен рекорчĕ – 55 экземпляр «Тетте», 40 экземпляр «Самант»!



Иртнĕ эрнере эпир çырăнтару «чемпионĕсем» патне кайса килтĕмĕр. Çырăнтарура малашне пысăк шанăç паракан Мăн Чураш шкулне те çула май кĕрсе тухрăмăр. Раççей Конституцийĕ 20 çул тултарнине халалласа иртнернĕ викторина çĕнтерӳçине Андрей Иванова Хисеп грамотипе чыслярăмăр.

Тури Ачакра пире хапăл туса кĕтсе илчĕç – йăтса çӳременни кăна ĕнтĕ. Чăваш кĕнеке издательстви те парне парса ячĕ – çĕклем кĕнеке илсе çитертĕмĕр шкула. Ачасен пултарулăхĕпе, çитĕнĕвĕсемпе паллашнă хыççăн «Самант» журналта шкула чысласа пысăк материал хатĕрлеме шутларăмăр. Чаплă та хаваллă шкул!

«Тантăшра» эпир «Тетте» çыраннă маттурсен сăн ӳкерчĕкĕсене пичетлес терĕмĕр. Журнал тусĕсем йышлăран вĕсене виçĕ ушкăна уйăрса сăнлама тиврĕ. «Самант» çырăнакансем вара çак журналта пичетленĕç.



Ачаксен чи пысăк вăртăнлăхне те уçса парар: «Çырăнтару ĕçĕ вĕçленмен-ха, йыш тата та хутшăнĕ», – тесе пĕлтерчĕç вĕсем. Рекорд çĕнелет апла, 40-55 кăтарту кивелет!

***Владимир СТЕПАНОВ.***



# Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13, VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
В.СТЕПАНОВ

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2308 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 516
Пичете нарăс уйăхĕн 12-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Мăн Чураш хастарĕсем

## Ўкерес ăсталăх туптанать кунсерен



Саккăрмĕш класра вĕренекен Екатерина Григорьева шкулта ўкерес ăсталăхпа палăрать. Мĕн ачаранах ўнер вăрттăнлăхне туптать хĕр ача. «Ытларах пейзаж тата портрет сăнлама кăмăллатăп. Вĕсене хут çине куçарма тăрăшулăхпа чăтăмлăх кирлĕ, унсăрăн ĕç курăмлăхĕ чакать», – тет хĕр ача.

– Катя, ўкернисĕр пусне сана тата мĕн килĕшет?

– Эпĕ çут çанталăка çав тери кăмăллатăп. Ялта çуралса ўсни тавралăха чунтан савма пушшех те пулăшрĕ пулĕ. Усă сывлăшра уçăлса çўреме юрататăп. Мана уйрăмах Чăваш Республикинче вырнаçнă ялсем, вăрмансем, сăртсем, уйсем килĕшеççĕ. Çынсен кăмăл-туйăмне лайăх пĕлес тесе ятарласа ўкеретĕп, кашни çын хăйне еврĕлĕ пулнине асăрхатăп.



– Эсĕ мĕнле ĕмĕтпе пурăнатăн?

– Манăн дизайнер е психолог пулас килет. Ют çĕр-шывсенче, тинĕс хĕрринче канас ĕмĕтпе çунатланатăп!



– Тантăшсене, пĕрле вĕренекенсене мĕн суннă пулăттăн?

– Кашни çын хăй шухăшлани пек пурăнма хăнăхтăр, урăх çын витĕмĕпе ан улшăнтăр. Пĕр-пĕринпе туслă пураннине нимĕн те çитмест-çке.

## Чĕр чунсене чунтан юрататăп



Çиччĕмĕш класра вĕренекен Ксения Владимирова чĕр чунсене шутсăр юратать, çав тери кăмăллать. Вĕсене сыхлама тăрăшать. Килĕнче темиçе кушак усрани те çакнах çирĕплетет. «Пĕри те мана чăрмантармаççĕ, питĕ килĕшеççĕ, юрататăп пĕчĕкскерсене. Чĕр чунсене кăмăллани сăвă çырас ăсталăха та туптама пулăшать, туйăма та аталантарать», – тет хĕр.

«Анне маншăн – чи хакли,
Чи ырри, чи çепĕççи.
Вăл пулсан – пурнăç тулли
Эп вара – чи телейли», – тесе шăрçалать çамрăк сăвăç. Ксения хăйĕн çитĕнĕвĕсемшĕн учительсене тав тăвать, вĕсем панă пĕлў сăвă çырма пулăшнине, аслисен ырă сĕнĕвĕсем пурнăçра пулăшса пынине ĕнентерет.

– Ксения, эсĕ тата мĕнле ĕмĕт-тĕллевпе çунатланатăн?

– Эпĕ мĕн ачаран тухтăр пулас ĕмĕтпе пурăнатăп. Çуллахи каникул вăхăтĕнче «Салют» кану лагерьне сывлăха çирĕплетме çўреттĕм. Анчах маншăн Мускаврва пулни уйрăмах асăмра юлчĕ. Унта зоопарка çитсе килтĕм. Аттракционсем нумайлăха асра юлчĕç. Мана мĕн килĕшет – çавăнпа кăсăкланатăп, мĕн тăвас килет – çавна пурнăçлатăп, ĕмĕтленнине пурнăçа кĕртмесĕр палăртнинчен пăрăнмастăп. Çавăн пекех манăн ют çĕр-шыва кайса курас тата космоса вĕçес килет.

– Вĕренўри çитĕнўсем еплерех?

– Тарăн пĕлў илесшĕн, май килнĕ таран пур çĕре те ĕлкĕресчĕ. Тĕрлĕ предметпа район, республика шайĕнче иртекен олимпиадăсенче пĕрре кăна мар хутшăнса çĕнтерўçĕ ята тивĕç пултăм. Çапах та тунă çитĕнўпе кăна лăпланмастăп. Шав малалла ăнтăлатăп.

– Мĕнех, ăнăçу вара сана тĕллевсене пурнăçлама.

– Тавах.

## Тĕллев лартрăн – пурнăçла

Николай Владимирович Малов депутатăн пултаруллă ачасене хавхалантаракан грантне тивĕçнĕ Андрей Иванов вĕренекен малашнехи пурнăç çине тăнăçлă пăхать. Çăмăл атлетикăра темиçе хутчен те çĕнтерўçĕ ята тивĕçнĕ каччă тĕрлĕрен практика конференцине те хутшăнать. Владимир Николаевич Черлаков ертсе пынипе Чăваш патшалăх университетĕнче иртернĕ наукăпа практика конференцийĕнче «Мĕншĕн чăваш ачин чĕлхи чухăн» ятарлă конкурса хутшăнса Хисеп хутне тивĕç пулнă. Пултарулăхне пула Андрея шкулта «Грани» пионер пĕрлешĕвĕн пуçлăхне суйланă, унта вăл пĕтĕм чунне парса тăрăшать. «Ахальтен мар ĕнтĕ вăл маншăн чи пултаруллă та хастар яш, маншăн вăл «пуçлăх», – тесе шўтлет шкул директорĕ.

– Андрей, эсĕ шкулта лайăх вĕренетĕн, тĕрлĕ олимпиадăпа ăмăртăва хутшăнатăн. Унсăр пуçне эсĕ тата мĕнпе интересленетĕн?

– Вăтам ĕмĕрти çар çыннисен хĕç-пăшалĕпе, тумтирĕпе кăсăкланатăп. Çак тема маншăн кăсăклă. Вĕсем мĕн тăхăнса пурăнни паянхи кун пуриншĕн те интереслĕ.

– Тăххăрмĕш класра вĕренекенĕн малашлăх ĕмĕчĕ мĕнлерех-ши?

– Эпĕ яланах пысăк ĕмĕт-тĕллевпе пурăнатăп. Çыннăн хăйĕн умне тĕллевсем лартмаллах, çавăн чухне çеç ĕмĕтсем пурнăçланаççĕ.

Етĕрне районĕ,
Мăн Чураш шкулĕ.

## «Орленок» ĕмĕр асăмра



Вун пĕрмĕш класра вĕренекен Диана Зубкова «Тантăш» хаçатпа тахçанах туслă. Редакцире йĕркеленĕ çамрăк сыравçăсен хушшинче иртернĕ конкурсра Диана çĕнтерсе «Орленок» ача-пăча сывлăхне çирĕплетекен центра кайма путевкăна тивĕçнĕччĕ.

– Диана, Сочире пулни мĕнпе асра юлчĕ?

– Унта кайса килни халĕ те асăмра. Çынсем туслă та ырă, йывăр вăхăтра пĕр-пĕрне ялан пулăшма тăрăшаççĕ. Тунсăхласа ларма вăхăт çукчĕ. Конкурссем, тĕрлĕ курав, уяв касĕ йĕркелеттĕмĕр. Халĕ те манас çук савăнăçлă самантсене.

– Диана, санăн кĕçех шкулпа уйрăлма вăхăт çитет. Малашнехи пурнăçна мĕнпе çыхăнтарасшăн?

– Манăн тĕллев вăл – çĕр-шыва юрăхлă çын пуласси. Ĕмĕт нумай. Ăна пурнăçлама чылай тăрăшмалла. Алă усмалла мар, ытти веçех йĕркеллĕ пулмалла .

– Тус-тантăшна мĕн суннă пулăттăн?

– 11 çул хушшинче темĕн те пулнă. Тавлашнă та пулĕ. Çавăнпа пурне те каçарма пĕлес пулать, кўренсе çўремелле мар, малалла тата та туслăрах, вăйлăрах пулмалла. Пĕр-пĕрне йывăрлăхра пулăшма, çĕнĕ утăмсем тума хавхалантарса пынине вара нимĕн те çитмест.

– Вĕрентекенсем шкулти пĕр мероприяти те Диана хутшăнмасăр иртмест теççĕ, çакă тĕрĕс-и?

– Мана ертўçĕ пулма килĕшет, уявсене те кăмăллатăп. Ўркенмелле мар – çавă çеç. Ун пек чухне йăлтах аван та йĕркеллĕ пулать.

– Вĕрентекенсемпе тата юлташсемпе еплерех хутшăнура, вĕсене мĕн суннă пулăттăн?

– Эпĕ пуринпе те пĕр чĕлхе тупма тăрăшатăп. Çĕр синчи мĕн пур лайăххине вĕсене сунатăп. Вĕрентекенсене хисеплетĕп. Вĕсем мана кулленхи пурнăçра çĕнĕрен те çĕнĕ утăмсем тума пулăшаççĕ, вĕрентсе, хавхалантарса пыраççĕ.

Маттурсем!

# Тарăн пĕлӳллĕ Ваня

Вуннăмĕшĕнчи Ваня Прокопьев кунта Ямаш шкулĕнчен куçнă. Чурачăкра тăвансем пур пулин те çĕнĕ вырăна пĕрикĕ уйăхран çеç хăнăхса çитнĕ вăл. Çак вăхăтра тантăшĕсемпе туслашма ĕлкĕрнĕ. Юлташсем пулсан вара ют çĕрте те хăвна килти пек туйăн.



«Малтанах хайне ытлах кăтартмастчĕ. Кайран уçă урокра Ваньăн пĕлĕвĕ тарăн пулнине асăрхарăм», – тет Людмила Геннадьевна вĕрентекен. Чăнах та, ытлашши сăмахлама юратман арçын ача урок темине хăвăрт ăса хывать. Маттурскер олимпиадăсене хастар хутшăнать. Физкультурăпа районта виççĕмĕш, географипе пĕрремĕш вырăнсене тухнă. Пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсне пĕлессипе вара нумай балл пухса республика шайĕнче те хутшăннă.

Ваня общество пĕлĕвĕпе тата историпе кăсăкланать. Ахаль мар пуль. Юрист пулма ĕмĕтленет-çке вăл. Иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ Игорь тата аппăшĕ Марина халĕ çав ĕçе вĕренеççĕ, çавăнпа Ваня та вĕсен çулĕпе каясшăн. Çавăн пекех ăна географи те килĕшет. Тăххăрмĕш класс хыççăн çак предметпа «пиллĕклĕх» экзамен тытнă вăл.

Спортпа туслă. Çулла футболла вылять, хĕлле йĕлтĕрпе ярăнать. 6-7 классенче вĕреннĕ вăхăтра районта «Хаваслă старт» эстафетăра пĕрремĕш чупса тухнă. Баскетболра та маттур. «Спорта юратман ачасем компьютер умĕнче нумай лараççĕ, çавăнпа часчасах чирлеççĕ», – тет Ваня.

# Шухăш тытнине вăл пĕрех пурнăçлĕ



Предмет олимпиадисене хутшăнакан тепĕр хастарçă – тăххăрмĕшĕнчи Юлия Алексеева. Районта экологипе тата математикăпа виççĕмĕш, астрономипе иккĕмĕш вырăнсене тухнă вăл. Вырăс литературипе тата экологипе вара республика шайĕнче те тупăшнă. Тăрăшуллăскер иртнĕ вĕренӳ çулĕнче район пуçлăхĕн стипендине те илсе тăнă.

Юля ташлама юратать. «Ташлакан шкул» тата «Пĕрле ташлатпăр» конкурссенче çĕнтернĕ. Ялти Культура çуртне çӳресси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ, унта вăл тĕрлĕ уяв йĕркелеме пулăшать. Хăйĕн пек ташăçăсемпе ял-ял тăрăх халăха савăнтарса çӳрет.

Кашни вĕренӳ çулне «5» паллăпа вĕçлекен хĕр ача биологипе тата химипе уйрăмах тăрăшса вĕренет. Çак предметсем юратнă профессие алла илме пулăшĕç тет вăл. Шухăш тытнине вара, çăмăлах килмесен те, пĕрех пурнăçлĕ.

Кĕнекепе туслăскер «Кĕмĕл ĕмĕрĕн литературине» питĕ кăмăллать. Илемлĕх курма тата туйма пĕлекенскер вулакан çыннăн чунĕ те хитреленессе ĕненет.

Çĕрпӳ районĕ,
Чурачăк шкулĕ.

ХУЛА ШКУЛĔ

# Юрă – чĕлхене вĕренме

*Хула шкулĕнче чăваш чĕлхине вĕрентме пĕрре те çăмăл мар. Нумайăшĕшĕн вăл ют чĕлхе пекех йывăр-çке. Çапах пултаруллă вĕрентекенсем пусне усмаççĕ, уроксене çĕнĕрен те çĕнĕ меслетпе пуянлатса ачасен вĕренес туртăмне ӳстереççĕ.*



Нумаях пулмасть Шупашкарти 3-мĕш лицей вĕрентекенĕ Лидия Николаевна Кузьмина пиллĕкмĕшсемпе уçă урок ирттерчĕ. Ăшă кăмăллăх хуçаланакан класра вĕренме те аван. Урок Республика гимнĕнчен пуçланни хăех пысăк хавхалану кӳрет. Çавăнпах пуль хĕр ачасемпе арçын ачасем пĕри те тепри алă çĕклесе ыйтусене хуравлама тăрăшрĕç, кашниех çирĕп пĕлĕвĕпе палăрасшăн пулчĕ. Чăваш патшалăх символĕсем, республикăри ялсемпе хуласем, юхан шывсем, йывăçсемпе чĕр чунсем çинчен те питĕ лайăх тавçăраççĕ вĕсем. Хăшĕ-пĕри паллă поэтсен тăван çĕр-шыва халаллана сăввисене пăхмасăр вуласа пачĕ, илемлĕх тĕнчине илсе çитерчĕ. Уйрăмах тăрăшуллисене Лидия Николаевна урок вĕçĕнче «5» паллăпа савăнтарчĕ. Ĕç-пуç çакăнпах вĕçленмерĕ-ха. Акт залĕнче тепĕр пысăк та кăмăллă кĕтменлĕх хатĕрленĕ иккен.

«Пирĕн тĕп предметсем – физикăпа математика. Чăваш чĕлхине те юрататпăр. Мĕншĕн-и? Мĕншĕн тесен эпир ăна юрăсем пулăшнипе вĕренетпĕр», – терĕç сцена çине чăваш кĕпипе тухнă маттур вĕренекенсем. Юрă хыççăн юрă шăрантарчĕç вĕсем. «Пирĕн урам анаталла», «Линккалинкка», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», «Çумăр çăвать», «Пăлан майраки» тата халăхăмăрăн ытти юрри те питĕ илемлĕн янăрарĕ. Тӳрех каламалла, ачасен пултарулăхĕ пысăк. Ăна малашне те аталантарасчĕ тесе тăрăшать Л.Н. Кузьмина. Вăл тăрăшнипе шкулта çыравçăсемпе тĕл пулусем те иртеççĕ. Пĕррехинче вĕренекенсем чăвашла таса та илемлĕ юрланине курсан Анатолий Кипеч çыравçă: «Ялти ачасем те кун пек пултараймаççĕ пуль», – тенĕ.



Вĕренекенсем чăваш чĕлхи урокĕ яланах кăсăклă иртнине палăртрĕç. «Пирĕн чăвашла калаçма пĕлмеллех», – тет Алеша Гаврилов. Ăна хальлĕхе çăмăлах марха. Çыннăн васкамасăр янăракан пуплевне аванах ăнланать вăл, хăвăрт калаçакансен сăмахĕсене çеç уйăрса илеймест. Историпе тата литературăпа кăсăкланакан ача Шупашкар мĕнле пулса кайнине те каласа пачĕ. Ăна тахçан ĕлĕк-авалах Шупаш ятлă кнеç пуçласа янă иккен. «Халăх историне пĕлни питĕ пĕлтерĕшлĕ», – тет Алеша. Юлташĕсене те чăвашсен кун-çулне тĕпчеме сĕнет.

«Мана чăвашла пĕр сăмах питĕ килĕшет. Вăл – «тунката». Янăравлăхĕпе тыткăнларĕ-ши, пĕлместĕп», – кулать Оля Данилова. Хĕр ача – вĕренӳре малта пыракансенчен пĕри. Килти ĕçсене те тĕплĕ пурнăçлать. Пĕррехинче кукамăшĕ хыççăн «Хыпар» хаçат вулама хăнăхнă вăл. Кăсăклă пек туйăнса кайнă. Çывăх çынни вара мăнукĕ тăван чĕлхене лайăххах вĕрентĕр, урокра йывăр ан пултăр тесе ăна Ашмарин словарьне парнеленĕ. Халĕ унпа урок тунă чухне усă курма питĕ меллĕ.

Люда Макашкина «Тетте» журнала кăмăлланине пĕлтерчĕ. Унти пĕчĕк калавсем питĕ килĕшеççĕ ăна. Халăхăмăрăн мухтавлă çыннисенчен Андриян Николаевпа Илле Тукташ уншăн уйрăмах пысăк хисепре. Ольăпа Люда ташлама тата ӳкерме ăста. Вĕсене çывăхлатакан тепĕр япала – чăваш чĕлхине юратни.

«Вĕрентекен ĕçĕ ачасенче палăрать», – теççĕ. Физикăпа математика предмечĕсене тарăнрах вĕрентессипе ĕçлекен 3-мĕш лицейра чăваш чĕлхине те кăсăкланса «шĕкĕлчеççĕ». Апла пулсан Лидия Николаевна хăйĕн ĕçне чунтан парăнни курăнатех.

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Хаваслă тĕл пулу – кăткăс тĕрĕслев



1


6


2


Сывлăх, ăнăçу-телей сунатăп хаçатăн çамрăк тусĕсене! «Тантăша» юратакансене хампа паллаштарма кирлĕ мар ĕнтĕ: Айсан Термене ас туса юлчĕç пулĕ. «Виртуаллă класс» проекчĕн хастарĕсем, Шупашкарти 10-мĕш шкулта 4 «и» класра вĕренекенсем Кӳкеç лицейĕн 8 «в» класри тусĕсем патне хăнана кайма хатĕрленнине тахçанах пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Иртнĕ эрнере, шартламана пăхмасăр, вĕт ура касси Кӳкеçе вĕçтерсе çитрĕ. Виртуаллă класăн хаваслă тĕл пулăвĕнче «Шевле» кăларăмпа ачасен чунне тыткăнлакан Марина Карягина та пулчĕ. «Виртуалсен» пултарулăхне курав валли ӳкерчĕ, «Тантăш» тусĕсем çитес вăхăтра уява телевизорпа та курма пултарĕç. Тĕл пулу вĕçĕнче Марина Федоровна та сăмах илчĕ, чунпа çунса тăракан маттурсене тивĕçлипех мухтарĕ.

Шупашкар ачисем кӳкеçсене концертпа савăнтарчĕç. Уяв-тĕл пулăва вĕсем тĕнчери чи хаклă çынна – аннене – халалланă. Шупашкарти 10-мĕш шкулта тăван чĕлхнене вĕрентессине ятарлă программăпа пурнăçлаççĕ. Хăнана пырса чĕлхе уявĕ ирттерни – хăйне евĕрлĕ экзамен вырăнĕнчех. Экзамен тытакансем вара ачасем çеç мар, вĕрентекенсем те. Тĕрĕслев çĕклемĕ, тен, учительсемшĕн йывăртарах та, тертлĕрех те.

Алина Егорова, Надежда Григорьева, Юлия Анисимова вĕрентекенсем опытлă педагогсем пулнине мансах кайрĕç тейĕн, тĕл пулура ачасенчен те ытларах хумханчĕç пулмалла. Хăнасене лицейри «Виртуаллă класс» проекта хутшăнакан Надежда Петрова вĕрентекен кĕтсе илчĕ. Уявăн хаваслă пайĕ курултай (акт) залĕнче иртрĕ, 4 «и» класс ачисен пултарулăхне куракансем тăвăллăн алă çупса йышăнчĕç. Пĕчĕккисем артистсенчен кая мар юрламаташлама ăста. Чăвашла шăкăртаттарса калаçни мĕне тăрать! Настя Родионовăпа Саша Абруков уяв ертӳçисен алли çăмăл пулчĕ, Мускаври концерт залĕнче халăха савăнтарнăнах тăрăшрĕç пĕчĕк артистсем. Дима Демейкин баян тăсса ярсан çур зал ура хуçса ташлама хатĕрччĕ! Концерт тытăмĕнчи «Аля кăвакалĕсем» инсценировка та тыткăнларĕ куракансене. Ашшĕ-амăш рольне выляма çăмăлах мар пĕчĕккисене. Пурнăç тути-масине пĕлекен, ырми-канми тăрăшакан сăнарсем калăплама пултарчĕç-пултарчĕçех вĕсем. Аля рольне вылякан Натали Сидоровăна «амăшĕ» – Юля Арбекова – малашне шкулта та сăнаса тăрассăнах туйăнчĕ. Инсценировкăна чăвашла лартасси кăткăс ĕç. Пĕчĕк артистсем – хула ачисем. Вĕсем рольсене такăнмасăр, тикĕссĕн вылярĕç, акцентсăрах калаçрĕç. Маттурсем ĕнтĕ!

Концерт хыççăн тăваттăмĕшсемпе саккăрмĕшсем чăваш чĕлхипе литература пӳлĕмĕнче паллашу тĕл пулăвĕ ирттерчĕç. Ачасем пĕр-пĕринпе именмесĕрех калаçрĕç, аслăрах-кĕçĕнрех тени сисĕн-мерĕ те. «Шевле» «пирĕштине» – Марина Карягинăна «виртуалсем» интервью пачĕç. Кабинетра ачасем пултарулăх самантне те йĕркелерĕç. Темиçе минутранах пĕр-пĕрне 100 çул пĕлнĕнех туйса илчĕç. Шупашкар ачисем лицейра питĕ килĕшнине пытармарĕç. Çывăх вăхăтра кӳкеçсем хăйсем те 10-мĕш шкула уяв программипе çитессине пĕлтерчĕç.

7



3


8


4


9


5


10


**Сăн ӳкерчĕксенче:**

1. Концерт пуçланчĕ!
2. Кӳкеçсем, Шупашкара концертпа каятăр-и?
3. Ташлама эпир ăста!
4. Мĕн кăна пĕлмеççĕ пуль вĕрентекенсем.
5. Виртуаллă класс тĕл пулăвĕн элчисем.
6, 10. Уява ертсе пыма çăмăл мар.
7. Линкка-линкка авкаланма хавас кăмăл кирлĕ.
8. «Мĕнлерех пирĕн артистсем?» – ыйтрăмăр Кӳкеç пикисенчен. Хуравне хăвăрах куратăр.
9. Юрлама-ташлама кăна мар, баян калама та ăста Дима.

# Çветтуй Валентин кунĕ мĕнле пуçланнă-ши?



Нарăсăн вун тăваттăмĕшĕ – Çветтуй Валентин кунĕ. Çак кун чылай çĕр-шывра каччăпа хĕр пĕр-пĕрне килĕштернине пĕлтерсе е çирĕплетсе юратнă çыннисене парнепе, чечек çыххипе, шăккалат-канфетпа тата чĕре евĕр открыткăсемпе, "валентинкăсемпе" савăнтараççĕ. Хăш чухне открытка камран иккенне те палăртмаççĕ, унăн хуçи хăй кăмăллакан çынна туйăмĕсем пирки пĕлтерет, анчах ятне çырмасть.

Мĕншĕн-ха Юратакансен кунне Çветтуй Валентин кунĕ теççĕ?

Çак икĕ чĕре праçникне вăтам ĕмĕрсенчех уявлама пуçланă, вăл тахçан католиксем Çветтуй Валентина халалланă праçникрен тытăнать.

496 çулта Римра пуçласа нарăсăн вун тăваттăмĕшне Çветтуй Валентин кунĕ тесе Галасиус атте пĕлтернĕ. Ăна виççĕмĕш ĕмĕрте асаплантарса вĕлернĕ Валентин священнике халалланă.

Пирĕн эрăчченхи 270 çулта Римра Клавдий император пĕр-пĕрне юратакан çамрăксене пĕрлешме юраман пирки указ çырнă. Вăл хăйĕн çĕр-шывĕнчи пĕтĕм ар çынна вăрçа ярасшăн пулнă. Анчах та Валентин священник пуçлăх сăмахĕнчен иртме хăйнă. Пĕрлешес туртăмлă çамрăксене халăхран вăрттăн пур пĕрех мăшăрланма ирĕк панă. Çакăншăн пачăшкăна тĕрмене хупнă, каярахпа çут тĕнчерен те уйăрнă.

Ирĕксĕрлĕхре ларнă вăхăтра вăл тĕрме хуçин хĕрне юратса пăрахать. Вĕлерме илсе каяс умĕн çамрăк священник юратнă пикине пĕчĕк çыру тыттарма ĕлкĕрет. Ун вĕçĕнче "Санăн Валентин" тесе çырнă пулать. Çакăнтанах Юратакансен кунĕнче пĕр-пĕрне "валентинкăсем" парнелесси пуçланса каять.

Юлашки вăхăтра çак юрату праçникне Японире Корея çĕр-шывĕсем те хаваспах уявлаççĕ.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

# “Валентинка” ăсталар-и?

Уявра юратнă çынсене открытка парнелесси йăлана кĕчĕ. Халĕ вара чун савнисене çеç мар, тус-юлташсене те "валентинка" тыттараççĕ. Шкулта вĕреннĕ чухне нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче пĕр-пĕрин патне открытка вĕçтернине ас тăватăп-ха. Пирĕн ятарлă почта пурччĕ. Ытларах чухне "валентинкăсене" лавккаран илетпĕр. Мĕн тĕрли кăна сутмаççĕ-ши унта! Çавнашкал илемлисене туяниччен вĕсене алăпа ăсталама та пулать-çке. Ун пеккине парнелеме тата та кăмăллă вĕт. Тăрăшса пăхар-и?

## Тӳмепе илемлетнĕ парне



Ăна хатĕрлеме мĕн кирлĕ-ши?
– хачă
– хĕрлĕ е кĕрен тĕслĕ картон хут
– клей
– тĕрлĕ тĕслĕ тӳме
– хăю

1. Картон хута çурмалла хуçлатмалла, унтан чĕре ӳкермелле, ăна касса кăлармалла.
2. Хăюран бант хатĕрлемелле. Чĕре хĕррине банта, тӳмесене çыпăçтарса хумалла. Пулчĕ те! Чуна пырса тивекен ăшă сăмахсене çырма манса ан кайăр.

## Вĕçĕмсĕр юрату



Ку "валентинкăна" хатĕрлеме мĕн кирлĕ-ши?
– Клей
– Шурă тĕслĕ хут
– Хĕрлĕ тĕслĕ хут

1. Шурă хутран пысăк чĕре касса кăлармалла.
2. Хĕрлĕ тĕслĕ хута купăс евĕр хуçлатмалла, унтан пĕчĕк чĕресем касса кăлармалла. Кайран вĕсене пысăк чĕре çине çыпăçтарса хумалла.
3. Чĕререн тухакан сăмахсене çырса хурăр.

*Ирина КОШКИНА хатĕрленĕ.*

# Çак куна уявлама чараççĕ



Çветтуй Валентин кунне темиçе ĕмĕр каяллах уявлама пуçланă. Çав вăхăтри йăла-йĕрке халĕ те сыхланса юлнă, анчах та кашни çĕр-шывра çак праçнике тĕрлĕрен ирттереççĕ. Ăна пач уявламан патшалăхсем те пур.

Сăмахран, Италире нарăс уйăхĕн 14-мĕшне "тутлă кун" теççĕ. Çынсем пĕр-пĕрне чĕре евĕр пылак çимĕç парнелеççĕ, унсăр пуçне кĕл чечек парса савăнтараççĕ.

Австралире Çветтуй Валентин кунĕ – чи анлă сарăлнă уяв. Кашнийĕ çывăх çынсене смс-çыру вĕçтерсе саламлать. Ар çынсем хĕрарăмсенчен ытларах "валентинка" туянаççĕ иккен.

Англире качча кайман хĕрсем ир-ирех тăрса чӳречерен иртсе каякан çынсене сăнаççĕ. Пĕрремĕш курнă ар çын пулас мăшăр иккен. Пĕр-пĕрне çемçе тетте, уйрăмах Teddy упасене, парнелесси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Ачасем кил тăрăх юрă шăрантарса çӳреççĕ, кил хуçисем вĕсене "валентинкăсем" парнелесе кĕтеççĕ. Ачасене пылак çимĕçпе сăйлаççĕ, вак укçа параççĕ. Унсăр пуçне британецсем Çветтуй Валентин кунĕнче хăйсен лашисене, йыттисене саламлаççĕ.

Французсем савнă çыннисене çеç мар, çывăх тăванĕсене, юлташĕсене саламласа пылак çимĕç, "валентинка", лотерея билечĕ парнелеççĕ. Унсăр пуçне çак çĕр-шывра хаклă капăрлăх парнелесси анлă сарăлнă.

Канадăра Çветтуй Валентин кунĕнче шкулта ташă касă иртет. Ачасем хăйсем ăсталанă "валентинкăсене" илемлĕ курупкана хураççĕ, унтан вĕсене учитель валеçет. Хĕр ачасемпе арçын ачасем хăйсен вĕрентекенĕсене те открыткăсем парса саламлаççĕ.

Финляндире вара нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче Юлташ кунне паллă тăваççĕ. Паллах, пурте тус-тантăшĕсене "валентинка" вĕçтереççĕ. Телефонпа шăнкăравласа саламлакан та сахал мар.

Хăш-пĕр çĕр-шывра вара Çветтуй Валентин кунне уявламаççĕ. Сăмахран, Иранра тата Сауд Аравийĕнче ăна уявлама ирĕк памаççĕ. Лавкка хуçисене "валентинкăсене", çемçе теттесене сутма чараççĕ. Çав кун хĕрлĕ кĕл чечек те сутма юрамасть.

*Ирина КОШКИНА пухнă.*

# Чуна тыткăнлакан саманта кĕтетĕр-и?



Ыран пĕтĕм тĕнчипех Çветтуй Валентин кунне паллă тăваççĕ. Çак уява юратакансене халалланă. Шкул ачисем те ăна чăтăмсăр кĕтеççĕ. Мĕншĕн тесен кашниех хăйне килĕшекене вăрттăн çырупа та пулин савăнтарасшăн. «Эсĕ питĕ лайăх хĕр ача», «Сан пек ырă чунлă ача урăх çук», «Эсĕ мана килĕшетĕн» е «Янахах çакăн пек илемлĕ кулăпа манăн чун-чĕрене ăшăтсам», – текен çырусем килсен камăн кăмăлĕ çĕкленмĕ?

Шкул ачисем çак уява мĕншĕн юратаççĕ-ши? Тен, хăшĕ-пĕри ăна пачах кăмăлламасть? Ыйтса пĕлер-ха.

**Лена Степанова, 15 çулта:** Пирĕн шкулта çак кун почта ешчĕкĕ çакаççĕ. Эпир унта «валентинкăсем» яратпăр. Иртнĕ çулсенче юратнине пĕлтерекен çыру чылаях килетчĕ-ха.

**Олег Шурумкин, 15 çулта:** Ку манăн юратнă уяв. Пĕчĕк хитре открыткăсемшĕнех кăмăллатăп пуль ăна. Хама килĕшекен хĕр ачана та, юлташсене те «валентинкăсемпе» савăнтаратăп.

**Сергей Егоров, 17 çулта:** Çак куна эпĕ питĕ кĕтетĕп, мĕншĕн тесен манăн анне Валентина ятлă. Ăна парнепе савăнтаратăп. Çветтуй Валентин кунĕнче килĕшекен хĕр ачасене чĕре евĕрлĕ илемлĕ открыткăсем çырса пама пулать. Пирĕн шкулта ăна кашни çулах уявлаççĕ. Ирхине почта ешчĕкĕ çакаççĕ, эпир пĕр-пĕрин патне ăшă саламлă çырусем вĕçтеретпĕр. Хăшĕ-пĕри вара алăранах тыттарать. Эпĕ «валентинкăсем» хатĕрлерĕм те ĕнтĕ. Иртерех çырса хурсан аванрах. Эсĕ çынна хисеплетĕн пулсан ăна «валентинка» паратăнах. Апла тăк сана хисеплекенни те пĕчĕк илемлĕ çырупа савăнтарĕ.

**Слава Андреев, 16 çулта:** Ку уява эпĕ ытлах кĕтместĕп, вăл маншăн пысăк пĕлтерĕшлех мар. «Валентинкăсем» хатĕрлеме юратмастăп, ман пата та çавăн пек открыткăсем сайра-хутра çеç килеççĕ.

**Людмила Капитонова, 15 çулта:** Нарăсăн вун тăваттăмĕшĕ... Тĕлĕнмелле уяв... Çав кун юратнă çынсене мĕн пур ăшă сăмахпа савăнтарма манас марччĕ. «Юрату – пысăк ăсталăх», – тенипе килĕшместĕп. Ансат япалана мĕншĕн кăткăслатмалла-ха? Юрататăн пулсан – ачалла юрат: уççăн, чĕререн, яланлăха. Чĕререн килĕштернĕ çынна çак кун «валентинка» парнелени сахал пуль. Телефонпа е Интернет урлă та мар, тĕл пулсах саламламалла. Чи кĕтни вара – пĕр-пĕрне: «Эпĕ сана юрататăп», – тесе калани.



**Илья Савастьянов, 17 çулта:** Паллах, эпĕ те çак уява чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Мĕншĕн тесен ун чухне килĕшекен хĕр ачана ытларах савăнтарма, ăна юратнине тепĕр хутчен ĕнентерме май пур. «Юрату сăр пурнăç çук», – тенĕ ваттисем. Чăнах та çапла. Юрату – чи таса та асамлă туйăмсенчен пĕри. Вăл пуррипе çын пуян та, телейлĕ те. Анчах юрату телей кӳтĕр тесен пĕр-пĕрне юратакансен таса чунлă та шанчăклă пулмалла. Пирĕн шкулта çак уявра тĕрлĕрен конкурс ирттереççĕ. Эпĕ юратнă хĕр пĕрчине асамлă парнепе савăнтарасшăн. «Валентинка» та тахçанах хатĕр. Марина, эпĕ сана юрататăп! Кӳрентернĕ самантсемшĕн каçарсам.

*Лариса ЧУРПАЙ.*

## Парнелемелли йĕркесем

Тӳпене сар хĕвел улăхсассăн
Уйăх, тен, пытанать пуль юри.
Пур чĕре те çуршаррăн пулсассăн
Эсĕ, тен, ман чĕремĕн çурри?

* * *

Питĕ ăмăр-çке çанталăк,
Хуть хĕвел пăхмасть пĕрех.
Пултăрах! Сан кăмăл савăк,
Хăв та эс хĕвел пекех!

* * *

Сан чуну ытла илемлĕ –
Эпĕ сисрĕм тахçанах.
Куçусем те вут хĕлхемлĕ,
Сутă çăлтăр çуннăнах.
Калаçсам манпа ачашшăн
Лăпкă, çепĕç сассупа.
Эп сан кăмăлна туясшăн,
Киленесшĕн сăнупа...

* * *

Ман чĕрем хыттăн-хыттăн тапать,
Юратни çинченех вăл калать.
Чĕреме илттĕр пĕтĕм тĕнче
Çак Çветтуй Валентин кунĕнче!

* * *

Урамра кунсерен ăшăрах,
Эс çукран чĕрере пушăрах.
Чунтанах виç сăмах çеç çырсам,
Аякри инçĕше çывхартсам.

* * *

Хĕвелĕ хĕрттĕр тӳпере,
Телей çуралтăр чĕрере.
Эс ăшшăн çеç йăл кулнă чух
Санран ырри те маншăн çук.

*Лариса ПЕТРОВА.*

ПУЛТАРУЛĂХ

# Путёвка пулăшнипе

## Фантастика калавĕ

Стюардесса пире çул çӳрев ăнăçлă иртнипе саламларĕ те самолет Чăваш Енĕн тĕп хули – Шупашкар – патне çывхарса пыни çинчен пĕлтерчĕ.

– Тинех киле çитетĕп. Еплерех тунсăхларăм сансăр, савнă Шупашкарăм! Сывах-и? Мана кĕтсе илме хатĕр-и? – чĕрем сиксе тухасла тапать. – Тинех! Тинех киле çитетĕп. Хăвăртрах тăван ялăма вĕçтересчĕ, аннене савăнтарасчĕ!

Самолет Шупашкар çийĕн вĕççе çаврăнчĕ. Чӳречерен Анне палăкĕ пире икĕ аллине сарса кĕтсе илни курăнать. Ун тавра фонтансем илĕртеççĕ. Вĕсем те пире хапăл пулас!

Кĕçех самолет аэропорта çитсе чарăнчĕ. Çул çинче паллашнă туссемпе сыв пуллашса автобус чарăнăвне васкарăм. Шăпах тăван яла Штанаша каякан рейс пулчĕ. Çийĕнчех билет туянтăм та çула тухрăмăр. Пирĕн яла халĕ кашни çур сехетрен автобус çӳрет. Президент программине пурнăçласа ял витĕр тухакан çула юсаса çĕнетрĕç, Шупашкара каймалли те самай кĕскелчĕ. Çул укçи те, вăхăт та перекетленет халь.

Чăматанра аннепе аппасем валли Аслă Британире туяннă парнесем, урокра усă курмалли тĕрлĕ кĕнеке-брошюра, фоторепродукцисемпе картинăсем, тĕрлĕ хулара туяннă открыткăсем, Аслă Британи укçи... Вĕсемшĕн аппасем те, анне те савăнĕç ĕнтĕ, урокра усă курĕç – виççĕшĕ те акăлчан чĕлхи вĕрентеççĕ. «Лондонри паллă вырăнсем» ятлă сувенир-черккесем аттене питĕ килĕшĕç. Елена валли – сувенир-майка, Рина валли – Биг Бен статуэтки. Аннене тĕлĕнтерме – музей сыхлавçи, ăна акăлчансем бифитер теççĕ. Асанне валли мĕн туянни хальлĕхе вăрттăнлăх пултăр.

Ял хыççăн ял мĕлтлетсе юлать. Автобус тӳрĕ те тикĕс çулпала хăвăрт вĕçтерет, çавăнпа вăл вăрах шуса пынăн туйăнать. Манăн часрах киле çитсе атте-анне ытамне кĕрсе ӳкес килет.

Эпĕ мĕнле майпа Лондона лекнине пĕлес килет пулĕ санăн, вулаканăм? Мĕнех, каласа парам.

Пĕррехинче эпир туссемпе Шупашкар тăрăх уçăлса çӳреме тухрăмăр. Шăпах Хула кунне уявлаççĕ, фестиваль ирттереççĕ. Пур çĕрте те юрă-кĕвĕ янăрать. Шупашкар кунне тĕрлĕ çĕр-шыв делегацийĕ килсе çитнĕ, кашниех хăйĕн юрри-ташшипе паллаштарать. Эпир акăлчансен концертне курма билет туянтăмăр. Темиçе юрă хыççăн конферансье концерт вĕçĕнче лотерея ирттересси çинчен каларĕ. Икĕ сехете яхăн пынă концерт хыççăн, чăнах та, билетсем тăрăх лотерея пуçланчĕ. Виçĕ çынна Англие кайса курма путевка парнелерĕç. Пĕрин хуçи Шупашкартан, тепри Етĕрне районĕнчен, виççĕмĕшĕ... эпĕ!

Тӳрех ĕненме тăхтарăм. Путевкине алла илсен те: «Çапах каясси пулмасть», – тесе шутларăм. Çул укçине фирма хăй тӳлет-мĕн, кайма пулать.

Атте-анне çула тухма пил пачĕ:

– Чипер кайса чипер кил. Чи хакли вăл – тăван кил.

Икĕ эрне хушши аннепе тăрăшсах акăлчан чĕлхи шĕкĕлчерĕмĕр. Вырăс-акăлчан, акăлчан-вырăс калаçу кĕнекисем, словарь туянтăм. Сывлăха тĕрĕслерĕç, вăхăтлăх ют çĕр-шыв паспорчĕ тутартăмăр, виза илтĕмĕр.

Çапла лекрĕм эпĕ Британири Бирмингхам хулине. Вăл халăх йышĕпе Лондон хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнать. Пире хулари пĕр цеха экскурсие илсе кайрĕç. Кунта станоксем валли хурçă шăратса кăлараççĕ, вăл машинăсем, карапсем, аэроплансем тунă çĕрте кирлĕ. Ĕçсене йăлтах механизациленĕ. Пĕр çын робот-автоматсем тăрмашнине пăхса ларать, пульт кнопкисем çине пусса вĕсене ĕçлеттерет.

Мана та цехра ĕçлеттерсе пăхрĕç. Малтанах роботсем эпĕ хушнине итлесшĕн марччĕ. Çапах парăнмарăм, темиçе кунтан вĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пултартăм-пултартăмах!

Пушă вăхăтра пире темиçе хутчен те Лондон хулине кăтартса çӳрерĕç. Экскурси автобусĕ икĕ хутлă. Тĕлĕнмелле! Малтанах «Лондон куçĕ» ятлă çӳллĕ карусельпе ярăнтăмăр. Хулан паллă вырăнĕсем çине çӳлтен пăхса тĕлĕнтĕмĕр. Пăхса пынă май хама тăван Шупашкарта пулнăнах туйрăм. Унта та кун пек карусель пур-çке!

Парламент çурчĕ çинче Биг Бен сехетне курсан хамăрăн Кремль куранчĕсене аса илтĕм. Пирĕн, тем тесен те, хитререх, сасси те янăравлăрах.

– Ку сехет маçтăрĕ вăрăм çын пулнă, çавăнпа ăна «Пысăк Бен» ят панă, – ăнлантарать экскурсовод. Аса илтерем, «биг» – чăвашла «пысăк».

Вестминстер аббатстви – пысăк чиркӳ. Кунта влаçа ларакан патшана чаплă корона тăхăнтартаççĕ. Çакăнтах чылай паллă çынна пытарнă.

Трафальгар лапамĕнчи Нельсон адмиралăн статуйи тĕлĕнтерет. Колонна хĕрĕх тăватă метр çӳллĕш, ун тăрринче пилĕк метрлă адмирал скульптури.

– Пирĕн Анне палăкĕ те мăнаçлă, – скульптора пĕлтерме васкатăп эпĕ.

– Мĕнех, Шупашкара пырсан курăпăр-ха, – килĕшрĕ вăл манпа.

Пире Гринвич обсерваторийĕ патне илсе кайрĕç. Çакăнта нуль меридианĕ вырнаçнă. Шăпах çакăнтан çĕр Хĕвел тухăçĕпе Хĕвел анăçне пайланать.

Хулари паркра пеликансемпе кăвакалсем ирĕккĕнех ишсе çӳренине курсан каллех Шупашкар заливĕнчи акăшсене аса илтĕм. Çак илемлĕ кайăксене чăваш халăхĕ питĕ юрататать.

Букингем керменĕ çийĕн ялав вĕлкĕшетчĕ. Ку вăл королева кермментех пулнине пĕлтерет. Тен, ăна та курăпăр. Телейĕм пур пулас. Кĕçех королева вăраххăн утса çӳренине курма май килчĕ. Вăл йытăсене уçăлма илсе тухнине вăрттăн сăнаса тăтăмăр. Шел, çумра фотоаппарат пулмарĕ, сăн ӳкерчĕк тăваймарăм. Туссене королевăна чăн-чăннипех курнине ĕнентерейместĕп ĕнтĕ.

Кĕнеке куравĕнче те пултăмăр. Раççейре пичетленсе тухнисем – ятарлă залра. Кунта Чăваш кĕнеке издательствинче кăларнисем те чылай.

Хулара тĕлĕнмелле ботаника сачĕ пур тет. Май тупса кайса курма шутларăм. Эпĕ улма-çырла çитĕнтерме юрататăп, манра хресчен юнĕ чупать-çке! Пирĕн кукаçи ĕмĕр тăршшĕпех улма-çырла пахчинче ĕçлерĕ, тем те лартса ӳстерчĕ. Унăн пахчинче вĕллесем те пур, пыл хурчĕсем кукаçине пачах тĕкĕнместчĕç. Шел, темиçе çул каялла кукаçи пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Пахчи вара пурăнать, çынсене савăнтарать, килен-каяна хăналать!

Ботаника сачĕ çав тери пуян-мĕн. Мана кукаçин пахчине лартма виçĕ тĕрлĕ çĕнĕ ӳсен-тăран парнелерĕç, савăнсах кайрăм.

Пахчан пĕр кĕтесĕнче такам мана кăчăк туртнăнах туйăнчĕ. Патнерех пытăм та тĕлĕнмелле чечек куртăм. Çичĕ çеçкеллĕскерĕн кашни çеçкин тĕсĕ хăйне евĕр.

– Мĕн çинчен ĕмĕтленетĕн, ырă йĕкĕт? – ыйтрĕ манран такам. Çаврăнса пăхрăм, никам та курăнмасть.

– Мĕн кулянтарать сана, ырă çыннăм?

– Кам калаçать-ши манпа? – тĕлĕнтĕм эпĕ.

– Ку эпĕ, чечек. Сана тем пăшăрхантарать пулас. Тен, эпĕ пулăшма пултаратăп?

Чечеке асанне чирлени çинчен каласа кăтартрăм.

– Эпĕ сана пулăшма хатĕр! Манăн кашни çеçкерен пĕрер тумлам сĕткен пухса ил те çак шерпете асаннӳне ĕçтер. Вăл сывалĕ! – ĕнентерчĕ мана чечек.

Çапла турăм та. Шерпете асăрханса пухса илтĕм, чечеке тав туса сыв пуллашрăм.

Шăпах çак парнене асаннене хăвăртрах çитерсе парасшăн киле васкатăп халĕ.

Кĕçех Элĕк чикки урлă каçрăмăр, Сар хурăн вăрманĕнчен иртсе Штанаш салине кĕтĕмĕр. Еплерех тунсăхларăм эпĕ сансăр, тăван енĕм!

Килтисене парнесемпе савăнтартăм, аннене пурçăн тутăр çыхтартăм. Асамлă чечек парнеленĕ шерпете аннене тата асаннене сыптартăм. Анне татах та çамрăкланса кайрĕ, яштакаскер, хитрескер, илемлĕ ырă кулăллăскер. Асанне те ахлатма чарăнчĕ.

***Алексей ЗОТОВ.***

# Ырă тăвакана хăйне ырă пулĕ

Надя кăçалхи çуркуннене чăтăмссăрăн кĕтрĕ. Ашшĕпе амăшĕ те, пиччĕшĕпе йăмăкĕ те тупсăмне пĕлеймерĕç. Пичĕ çинче савăк кăмăл кăрлач уйăхĕнчех палăра пуçларĕ-ха. Хĕр вара нимĕн те каламарĕ. "Вăхăт çитсен пĕлĕç," – шухăшларĕ вăл.

Тунти кун Надя яланхиллех шкула утрĕ. Класа кĕрсенех пĕрле вĕренекенсем темĕн сӳтсе явнине асăрхарĕ.

– Ман çинчен элек сарман-ши? – кун пирки шухăшласан хĕр хăраса ӳкрĕ.

Класри ачасем шкул умĕнчи хурăнсем çине шăнкăрч вĕллисем туса çакса хума шухăшланă иккен. Анчах та хăтлă йăва ăсталама никам та пĕлмест.

– Пĕлетĕп! – савăннипе кăшкăрса ячĕ Надя. – Атьăр, технологи учителĕ патне каятпăр, унăн йывăçран тĕрлĕ япала ăсталама вĕрентекен кĕнеке пур. Тен, унта йăва еплерех тумаллине кăтартса панă?

Уроксем вĕçленсен çиччĕмĕшсем Николай Иванович патне васкарĕç. Телее, кĕнекере хăтлă шăнкăрч йăви тумалли меслет пирки çырнă. Ачасем нарăс уйăхĕнчех ĕçе пикенчĕç, мастерскойне пухăнса тĕплĕн ĕçлерĕç. Пуш уйăхĕ тĕлне вĕренекенсем пилĕк шăнкăрч йăви хатĕрлерĕç. Шăмат кун, уроксем хыççăн, маттурскерсем йăвасене шкул умĕнчи хурăнсем çине çакрĕç. Надя та пусма çине тăрса юлташĕсемпе ăсталанă шăнкăрч йăвисене папкана ларма пуçланă йывăç çине çакрĕ. Ĕç вĕçленсен ачасем килĕсене саланчĕç.

Тепĕр кун, шкула килнĕ чухне, çиччĕмĕш класра вĕренекенсем шăнкăрч сассине илтсен савăнчĕç. Пур йăвана та "хура йăмăксем" йышăннă иккен.

Кĕçех Надя лайăхрах вĕренме пуçларĕ. Виççĕмĕш чĕрĕке "5" паллăпа вĕçлерĕ. Çакăншăн хĕр ача та, килтисем те питĕ хĕпĕртерĕç. "Ырă тăвакана хăйне ырă пулĕ", – тесе ахальтен каламан çав.

***Олеся ИГНАТЬЕВА.***

# Сывлăм тăрăх

Каç пулсан анне васкаса пӳрте кĕчĕ.

– Ыран ир-ирех улăха утă çулма каятпăр. Ара, çак кунсенче çумăр çăвасси çинчен калаçаççĕ, – пĕлтерчĕ вăл пиччепе иксĕмĕре.

– Эх, ыран вăрмана çырла пуçтарма каясшăнччĕ, пулмарĕ... – пичче кăмăлсăр пулчĕ.

Эпĕ ăна лăплантарма тăрăшрăм:

– Ан кулян, çырла вăхăчĕ çитсе çеç пырать. Пуçтарса ĕлкĕрĕпĕр-ха...

Тепĕр кун ирхине хĕвел тухиччченех тăтăмăр, апатлантăмăр. Унтан атте çавасене илчĕ, эпир çемйипех улăха утă çулма васкарăмăр.

– Паянах çумăр çумасть пулĕ-ха, сывлăм ӳкнĕ, – терĕ пире анне.

Улăх ялтан аякра вырнаçнă. Эпир çула кĕскетес шухăшпа уй урлă утрăмăр. Васканăран урасем ывăнса çитрĕç. Атте чарăнчĕ те:

– Çара уран утма пултаратăр, сывлăм çинче утни питĕ усăллă, – терĕ.

Пиччепе пушмаксене хыврăмăр та ирхи сывлăм тăрăх çерем çине пĕрремĕш хут тухнă путексем пек сиккелесе кайрăмăр.

Эпир улăха çитнĕ çĕре хĕвел тухрĕ. Улăхра курăк çăра. Çава тытса ĕçе пикентĕмĕр. Сывлăмпа йĕпеннĕ курăк ытла та лайăх çулăнать. Йышпа ĕçлеме те кăмăллă, икĕ сехет хушшинче лаптăка çулса та пĕтертĕмĕр. Анне пире мухтарĕ.

– Утта çапла хăвăрт çулса пĕтерессе шухăшламанччĕ, – терĕ вăл савăннипе.

Тепĕр кунхине алă-ура ыратнăран аптăрарăмăр. Аттепе анне пире шеллерĕç, утă салатма пирĕнсĕрех каяссине пĕлтерчĕç. Пиччепе иксĕмĕр килĕшрĕмĕр.

– Маша, аттепе анне килнĕ çĕре çырларан тутлă апат хатĕрлер. Савăт илсе халех вăрмана каяр, – хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ пичче.

Ваньăпа иксĕмĕр вăрмана çул тытрăмăр. Çеремлĕ çулпа каллех çара уран пытăмăр. Сывлăмлă курăк тăрăх утма аван. Урана уçăлтарать, тасатать... Сывлăмпа утса шăмшак ыратнине те туймарăмăр.

Вăрмана çитсен пиçсе çитнĕ çырласене пуçтарма пуçларăмăр. Кунта таса сывлăш, ем-ешĕл тавралăх, пĕр чарăнми юрлакан кайăксен сасси чуна çĕклентерет. Çак илемпе киленсе савăтсене тултартăмăр, унтан киле васкарăмăр.

Вăрмантан тухнă çĕре сывлăм типсе çитнине асăрхарăмăр, анчах пĕрех çара уран чупрăмăр. Киле аттепе анneрен маларах çитрĕмĕр, вĕсем валли апат хатĕрлерĕмĕр. Çак кунтан пуçласа эпĕ сывлăм ӳкнĕ курăк тăрăх яланах çарран утма тытăнтăм. Вăл ытла та сиплĕ-çке!

***Олеся ИГНАТЬЕВА.***

# Тăлăх Марук

**Левтина Марье**

(Вун икĕ курăнуллă инсценировка)

**(Малалли.**
**Пуçламăшĕ 39, 41, 45-мĕш, 1-мĕш (2014 ç.) номерсенче)**

**6-мĕш курăну**

***Нарăс уйăхĕ. Кăнтăрлахи апат хыççăн тăрук асар-писер çил-тăман урамра ним курăнми вĕçтерме тытăнать. Уласа вĕрнипе чӳрече кантăкĕсем те макăраççĕ тейĕн, чĕтрене-чĕтрене чĕриклетеççĕ. Килĕнче Марукпа пĕчĕк тусĕсем кăна. Аслашшĕпе асламăшĕ мăнукĕ валли акварель сăрăсем туянма тутлă апат-çимĕç илме тесе ирех района тухса кайнăскерсем, часах таврăнаймарĕç. Вĕсем килсе çитиччен Марук çав тери тăрăшса ĕçлерĕ: вутă хутса апат та пĕçерме ĕлкĕрчĕ, пур çĕрте те тирпейлерĕ. Уроксене те хатĕрлерĕ. Урамра часах тĕттĕмленчĕ. Каç пулчĕ. Марук чӳрече умне пырса тăрса шухăша кайрĕ. Вăл чунтан кулянние тусĕсем тӳрех ăнланса илчĕç.***

**Шарик.** Гав-в-в!..

**Машунь.** Мя-у-у!..

**Гоша.** Çил тăман улать: «У-у!.. У-у-у-у!..»

**Марук.** Ах, туссем, ман асаттепе асаннене мĕн пулчĕ-ши? Мĕншĕн вĕсем халĕ те килсе çитеймерĕç-ха?.. Юлашки автобус яла çитиччченех килекенччĕ-çке... Унтанпа сехет çурă та иртрĕ... Е çил-тăман хӳсе кайнипе автобус мăн çула çитиччен кăна килчĕ-ши? Апла пулсан яла тата виçĕ çухрăма яхăн утмалла... Тем тесен те ку асар-писер çил-тăмана пула вĕсем çултан пăрăнса кайса таçта çухалса кайрĕçех пек туйăнать... Шарик, тен, вĕсене кĕтсе илме хирĕç тухăпăр?

**Шарик** (*савăнса*). Гав-гав-гав!

**Машунь** (*килĕшет*). Мяу, мяу!

**Гоша.** Тухăр! Тухăр! Хăвăртрах тухăр!

**Марук.** Эпĕ тăхăнтăм, хатĕр! Кайрăмăр, Шарик! Ман хыççăн!

***Марукпа Шарик васкаса тухаççĕ те тӳрех мăн çул еннелле чупаççĕ. Вĕсем хӳсе лартнă юр куписем урлă çиле хирĕç аран-аран ашса пĕтĕм вăйран малалла талпăнаççĕ. Малта – Шарик, хыççăн – Марук.***

**Марук.** Асатте-е-е! Асанне-е-е! А-й!.. Ăçта эсир?! Сасă парă-ăр!..

**Шарик.** Гав-гав-гав! Гав-гав! Гав-в-в!..

**Марук.** Шарик! Енчен те çухалнă пулсан, тархасшăн, туп вĕсене! Пĕтĕм шанчăкăм та сана кăна-а-а! Эпĕ вĕсемсĕр пурăнма пултараймастă-ăп! Туп, Шарик! (*Макăрать*).

**Шарик.** Р-р-р, гав! Гав-гав-гав-гав! Ав-в!..

**Марук.** Асатте-е!.. Асатте-е! Ăçта эси-и-ир?!

**Асанне.** Мару-ук! Эпир кунта-а!

**Асатте.** Шари-и-ик!

**Марук.** Шарик! Илтетĕн-и?!

**Шарик.** Гав-в!

**Марук.** Вĕсем чăнахах та çухалса кайнă! Туп вĕсене! Туп хăвăртрах!

**Шарик.** Гав-гав-гав!..

**Марук.** Тупрăн-и?!

**Шарик.** Ав-в!..

**Асанне.** Ах, Шарик! Ах, мăнукăм! Нивушлĕ эсир пире вилĕмрен çăлма пултартăрах?.. Тавах сире, ачасем...

**Асатте.** Мĕнле-ха çак çанталăкра пĕр хăрамасăрах пире шыраса тупас тесе уя тухма пултартăр?! Мĕн тери ырă кăмăллă вĕт-ха эсир...

**Марук.** Юратнă асаннепе асаттеçĕм! Маттур та ăслă Шарик сире тупма пулăшнăшăн çав тери савăнатăп. Эсĕ чи-чи шанчăклă тус!

**Шарик** (*савăннипе сиккелет*). Гав-гав-гав! Гав!

**Марук.** Атьăр-ха, çил вĕçтерсе каясран алăран хытăрах тытăнар та çул çине тухма тăрăшар! Шарик! Çул кăтартса пыр-ха!

**Шарик.** Гав-гав-гав! Р-р-р!.. Р-р-р, гав!

**Марук.** Тухрăмăр пулас!

**Асанне.** Ай-яй, тинех хамăр кил умне çитрĕмĕр.

**Асатте.** Ваттисем ахалех: «Çил-тăман тухсан йыттуна та урама ан кăлар...» – тесе каланă иккен.

**Шарик** (*савăнса*). Гав-гав-гав!

***Пӳрте кĕнĕ-кĕмен вĕсене Гошăпа Машунь курсан çав тери савăнса ӳкеççĕ. Машунь тӳрех сак çинчен сиксе анать те асламăшĕн ури йĕри-тавра сĕртĕне-сĕртĕне ачашланать. Гоша туратран турат çине сике-сике савăннипе çунат сарать.***

**Гоша.** Тупăнчĕç! Тупăнчĕç! Ура! Ура! Ура!

**Машунь.** Мяу! Мяу!..

**Асанне.** Пӳртре мĕн тери ăшă! Марук, эсĕ вутă хутмарăн пулĕ те, ачам?

**Марук.** Вут хутрăм, яшка пĕçертĕм, чăхсене тухса çитертĕм.

**Асатте.** Маттур та вара эсĕ, мăнукăм.

**Гоша.** Маттур! Маттур!

**Машунь.** Мяу!

**Шарик.** Гав!

**Асатте.** Ĕçчен те маттур пулнăшăн эпир сана мĕн кирлине йăлтах туянтăмăр. Тусусем валли те «Вискас», «Чаппи» тата ăшаланă хĕвел çаврăнăш илсе килтĕмĕр.

**Марук.** Ой! Мĕн тери пысăк савăнăç! Эпĕ халь ку акварель сăрăсемпе темĕн чухлĕ ӳкерме пултаратăп. Чи малтан атте-анне сăнĕсене. Тавтапуç.

**Гоша.** Тавтапуç! Тавтапуç!

**Машунь.** Мяу!

**Шарик.** Гав!

**Марук.** Час сăмавар чĕртем-ха. Халех ларса вĕри чей ĕçĕпĕр, атту шăннă асаттепе асанне чирлеме пултарĕç.

**Асатте.** Питĕ тĕрĕс, Марукăм, эпир уйра çав тери шăнса хытăркарăмăр.

**Асатте.** Киле çитессе пĕрре те шанманччĕ...

**Марук.** Асатте, асанне, ларăр. Эпĕ сире халь хăмла çырли вареннийĕпе чей ĕçтерĕп.

**Асаттепе асанне.** Тавтапуç, мăнукăм.

***Ши! шăхăрса юрлакан сăмавар йĕри-тавра ларса тухнă Марук, аслашшĕпе асламăшĕ: «Ай тутлă-çке!..» – тесе варенипе чей сыпса ĕçеççĕ. Гоша, Машунь тата Шарик те хăйсен чи-чи юратнă апачĕсене савăннипе шăп пулса хӳрисене вылятса çиеççĕ. Урамра çил-тăман татах та вăйлăрах уласа вĕрни илтĕнет, чӳречерен шакканăн, алăка тулланăн туйăнать. Пурĕ пĕр ăшă пӳртре ларакан туслă çемьешĕн вăл пĕрре те хăрушă мар. Халĕ вара пачах урăхла, пурне те ачашшăн лăпкаса ырă каç суннă пек кăна туйăнать.***

***Нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнче шкулта пысăк уяв иртрĕ. Унăн ячĕ – «Тăван çĕр-шыва хӳтĕлекен». Пырса куракан хăнасене малтан ăста чи çамрăк ӳкерӳçĕсен выставкипе паллаштарчĕç. Марукăн ĕçĕ шăп варринче тĕлĕнмелле илемлĕн курăнать. Унта вăл аслашшĕ çамрăк чухнехине ӳкернĕ. Салтак автомат тытнă, Тăван çĕр-шыв чиккине сыхлать. Унпа юнашар хăлха тăратнă овчарка тимлĕн пăхса ларать. Аялта: «Ман асатте – Тăван çĕр-шыва хӳтĕлекен» – тесе çырса хунă. Марук ĕçне хакласа пĕрремĕш вырăна кăларчĕç. Пурин умĕнче те çамрăк ăста ӳкерӳçĕне мухтарĕç, юлашкинчен Хисеп грамоти парса чысларĕç. Марук çав тери савăннипе тӳрех килнелле чуптарчĕ.***

**Марук.** Асатте! Асанне!

**Асанне** (*хăраса*). Мĕн пулчĕ, Марук?

**Асатте.** Тем пулмарĕ пулĕ те?

**Марук.** Эпĕ паян пĕрремĕш вырăна тухрăм!

**Асанне.** Чупса е сиксе?

**Марук** (*кулать*). Ан култар-ха, асанне. Чупса та мар, сиксе те мар! Акă курăр. Аллăмра Хисеп грамоти!

**Асатте.** Ай-яй! Ку чыслă хута мĕншĕн пачĕç-ха тата?

**Асатте.** Каллех мĕн туса тĕлĕнтертĕн, мăнукăм?

**Марук.** Ăста çамрăк ӳнерçĕсен выставкинче эпĕ пĕрремĕш вырăна тухрăм. Вăт!

**Асатте.** Пирĕн мăнук çав тери маттур.

**Гоша.** Маттур! Маттур!

**Машунь.** Мяу!

**Шарик.** Гав!



**Асатте.** Унта мана ӳкерсе хунăшăн тавах, Марук. Вăл вăхăтри самантсем халĕ те куç умĕнчех...

**Марук.** Сана тăшманпа тĕл пулма тӳр килнĕ-и? Асаттеçĕм, каласа кăтартсамччĕ.

**Асатте.** Юрĕ-çке, каласа парасах пуль.

**Марук.** Ура!

**Асатте.** Вăрçă хыççăнах мана хĕвел анăç чиккине сыхлама хăварчĕç. Пĕррехинче эпĕ будка çумĕнче постра тăратăп, çумра йытă. Çар бинокльĕпе йĕри-тавра тимлĕн сăнатăп. Тăрук патшалăх чикки çывăхне икĕ çын вăрттăн упаленсе çывхарнине курах кайрăм. Çавăнтах заставăна пĕлтерсе тревога çĕклерĕм те тăшмана ярса тытас тĕллевпе тапса сикрĕм. Манран малта йытă ыткăнать. Ак хайхискер вĕсемпе тĕл пулса пĕр-пĕрне ярса тытса хăрушла çапăçса кайрăмăр. Пĕринпе эпĕ, теприпе манăн кашкăртан та хаяр йытă. Вĕсем вăйлă, эпир тата вăйлăрах! Пистолетран персе иксĕмĕре те амантрĕç, пурĕ пĕр вĕсене вĕçертмерĕмĕр. Чикĕ хуралçисем çитсе ĕлкĕрчĕç. «Кĕтмен хăнасене» хăвăрт кирлĕ çĕре илсе кайрĕç, пире госпитале ăсатрĕç... Çапла икĕ шпиона тытса чарнăшăн йытăпа иксĕмĕре те ун чух медаль парса чысларĕç.

**Марук.** Ой, асатте! Мĕн тери паттăр, хăюллă пулнă эсĕ!

**Гоша.** Паттăр! Хăюллă!

**Машунь.** Мяу! Мяу!

**Шарик.** Гав! Гав!

**Марук.** Эпир паян хамăр класри арçынсене те – пулас салтаксене уяв ячĕпе саламларăмăр. Сăвă вуларăмăр.

**Асатте.** Эсĕ, мăнукăм, мĕнле сăвă вуларăн?

**Марук.** Сыхă тăрăр, салтаксем –
Çĕр-шыв сыхлавçисем!
Тăшмана, тăван çĕре
Ан таптаччăр ĕмĕре!
Пур халăхпа туслашар,
Килĕшӳллĕн пурăнар.

Тата, юратнă асаттеçĕм, манран тепĕр парне. Ку вăл – открытка. Ăна эпĕ хам тăрăшса илемлетрĕм. Уяв ячĕпе сана саламлатăп, çирĕп сывлăх тата вăрăм кун-çул сунатăп.

**Гоша.** Саламлатăп! Саламлатăп!

**Машунь.** Мя-у!..

**Шарик.** Гав-в!..

**Асатте.** Эпĕ те лавккана кайса торт туянтăм.

**Марук.** Чăнах-и, асанне?!

**Асатте.** Чăнах, чĕвĕлти мăнукăм. Халех сăмавар чĕртетĕп.

***Тортпа чей ĕçнĕ хыççăн пурте выртса канаççĕ, ыйха путаççĕ. Пĕр Марук кăна аслашшĕ паян мĕн каласа кăтартнине тепĕр хут аса илсе ниепле те çывăрса каяймасть. Вăл никама систермесĕр чĕрне вĕççĕн утса чӳрече çумне пырса тăрать. Ăна сиссе-ши çил-тăман та тăрук лăпланать. Марук чӳрече каррине уçса тӳпенелле тинкерет. Унта çурла евĕр çутă уйăх мăнаçлăн шуса тухать, ун йĕри-тавра çăлтăрсем йăлтăр-р çутăла-çутăла карталанаççĕ. Марук хăй сисмесĕрех шăппăн калаçать...***

**Марук.** Ах, мĕн тери илемлĕ вăл асамлăн курăнакан тӳпе... Тен, кăпăшка пĕлĕтсем хушшинче манăн аттеçĕмпе аннеçĕм те пирĕшти пулса вĕçеççĕ, мана çӳлтен ăшшăн саламлаççĕ... Эпĕ вĕсене курмастăп пулсан та чун-чĕрепе таçтанах туятăп, алă сулатăп... Чи-чи хаклă аннеçĕмпе аттеçĕм, эпĕ сире çав тери юрататăп. Эсир çавăн чухне машинăпа тăрук çапăнман пулсан, халĕ виççĕмĕр мĕн тери телейлĕ пурăннă пулăттăмăр... Ах!... Çук-çук, эпĕ макăрмастăп... Эпĕ пĕччен мар, манăн хисеплĕ асаттепе асанне тата пĕчĕк туссем пур. Вĕсемпе мана лайăх... Халĕ эпĕ кайса çывăратăп, тен, тĕлĕкре татах та тĕл пулса калаçăпăр... Сире ырă каç сунатăп хальлĕхе...

Тĕрлĕрен: вула та пĕл

# Атом взрывĕ кĕскетнĕ кун-çул...





**Садако Сасаки – Хиросимăри атом взрывне пула чирлесе пурнăçран уйрăлнă япон хĕр ачи. Бомба çурăлнă вăхăтра вăл икĕ çулти пепке, килĕ вара эпицентртан çухрăм çурăра кăна пулнă. Вунă çултан этем тискерлĕхĕ шар кăтартнă ача лейкимипе чирлесе вилнĕ.**

Йывăр чире тупса палăртсан хĕр ачана госпитале хунă. Ун патне час-часах çӳрекен çывăх юлташĕ пĕррехинче халап каласа панă. Ăна ĕненес тĕк, хутран пин чухлĕ пĕчĕк тăрна ăсталасан мĕн ĕмĕтленни пурнăçланатех. Садако çак халапа ĕненнĕ, госпитальти чылай сипленекен пекех алă айне лекнĕ кирек епле хутран пĕчĕк кӳлепесем тума пуçланă. Шел, сакăр уйăхран хĕр ачан пурнăçĕ татăлнă. Ун çинчен çырнă хăш-пĕр кĕнекене ĕненес пулсан вăл 644 тăрна çеç туса ĕлкĕрнĕ. Ыттине кайран юлташĕсем ăсталаса çитернĕ. Садакона хутран тунă пин тăрнапа пĕрле пытарнă.

Садако – ядерлă хĕç-пăшала йышăнманнине кăтартакан символ евĕр пулса тăнă. Унăн паттăрлăхĕпе тата кăмăл çирĕплĕхĕпе хавхаланнă юлташĕсем Садако çырăвĕсене пичетлесе кăларнă. Вĕсем çак хĕр ачана тата çакнашкал инкеке лекнĕ ытти ачана халалласа палăк лартасси пирки те шухăшлама тытăннă. Япони çамрăкĕсем ĕçе пуçăнма укçи-тенкине хĕрхенмен.

1958 çулта Хиросима хулинчи Туслăх паркĕнче хутран тунă тăрнана çĕклекен Садако палăкне вырнаçтарнă. Ун çине çапла çырнă:

*«Ку – эпир кăшкăрни.*
*Ку – пирĕн кĕлĕ.*
*Пĕтĕм тĕнчере мир пултăр!»*

1962 çулта М.Горький киностудийĕнче «Сывă-и, ачасем!» илемлĕ фильм ӳкернĕ чухне çак хĕр ачан телейсĕр шăпине тĕпе хунă. Садако çинчен ача-пăча кĕнекисем кăларнă, комикссем, фильмсем тата мультфильмсем ӳкернĕ, юрă çырнă. Чи паллă кĕнеке – Элеанор Коэр çырнă «Садако тата хутран ăсталанă пин тăрна», ун тăрăх Америкăра фильм кăларнă.

## Садако амăшĕн, Фуджико Сасаки çырăвĕ, 1956 çул

*«Таврăн ман пата, Садако!*

*Амăшĕн чĕрине телейсĕр ачаран çывăхраххи çук… Эпĕ – тăватă ача амăшĕ, анчах Садакона пуринчен ытларах хĕрхенетĕп. Вăл кайнăранпа сакăр уйăх иртрĕ. Телейсĕр ачаччĕ, чăнах та. Вăрçă çулĕсенче çуралчĕ те, килте çимелли те çитместчĕ, унăн йывăрăшĕ 2250 грамм çеçчĕ. Пур пĕрех вăл, пневмонипе чирленĕ тапхăра шута илмесен, йĕркеллех ӳсетчĕ. Упăшка çав вăхăтра çартаччĕ.*

*Хĕрĕме мухтанинчен эсир кулма та пултаратăр. Анчах вăл çав тери тимлĕ те ăнланакан хĕр ачаччĕ, ăна яланах шанма пулатчĕ. Вăй пур таран мана пулăшатчĕ. Эпĕ ыйхă килмесенех хамăн имшерленсе кайнă, кайран пурнăçран уйрăлнă пепкем çинчен шухăшлатăп. Тепĕр хутчен ыталăттăм ăна. Тĕлĕкре час-часах Садако: «Шан мана, анне», – тет. Ăна ятран чĕнсе вăранса каятăп. Кайран вара ку тĕлĕк çеç пулнине ăнланатăп та каллех ун çинчен шухăшлама пуçлатăп. Куляннипе хутранситрен йăлтах манатăп, вилнĕ хĕрĕм сăн ӳкерчĕкĕ умĕнче кĕл тăватăп. <...>*

*Садако хăйне аванах туятчĕ, хăй темиçе кунтан вилессине чухламастчĕ те. Тухтăр пире унăн шутлă кунсем çеç юлнине пĕлтерсен упăшкапа иксĕмĕр çывăракан Садако çине пăхса нумайччен йĕтĕмĕр. Куççульпе чыхăнса: «Хĕрĕме чиртен сыватма мĕн те пулин тăвасчĕ...» – теттĕмĕр. Шухăша путнă май Садако аллине чăмăртаттăм… «Тĕнчере çак хăрушă чиртен çăлакан эмел пулсан эпĕ кивçене кĕрĕттĕм, анчах уншăн вунă миллион йен ыйтсан та ăна илĕттĕмех. Е, юрать пулсан, хĕрĕм вырăнне манăн вилесчĕ...» Анчах эпир çав тери чухăнччĕ, пурăнма аран çитсе пыратчĕ. Эпĕ тĕпренчĕкĕмшĕн тем тума та хатĕрччĕ. Сакăр уйăхран вăл пирĕнтен уйрăлса кайрĕ, чĕрем çурăлса тухатчĕ, мĕншĕн тесен эпĕ уншăн çаплах ним те тăваймарăм.*

*Хĕрĕм часах вилессине пĕлтерсен ун валли чие çырли тĕслĕ пурçăн пусма туянса каçхине кимоно çĕлерĕм. Ăна Садакона панă чухне вăл куççульленчĕ те: «Анне, эсĕ маншăн ытлашшипех тăрăшатăн», – терĕ. Çак япалана вăл эпĕ питĕ ыйтнипе кăна тăхăнчĕ, куçне шăлчĕ те çав тери телейлĕ курăнса кайрĕ.*

*Садако эпир епле чухăн пурăннине пĕлетчĕ, анчах нимĕн те каламастчĕ. «Анне, эсир манăн чиршĕн çав тери тăкакланатăр пулсан эпĕ сирĕн лайăх пепкĕ-рех мар...» – тетчĕ çеç. Ытти ача пекех унăн та нумай япала туянса пама ыйтас килетчĕ пуль, иккĕленместĕп. Сăмахран, çĕнĕ çи-пуç. Анчах вăл кун пирки нихăçан та каламан, пĕтĕмпех хăйĕн ăшĕнче тытатчĕ. Мĕншĕн тесен эпир епле чухăн пулнине пĕлетчĕ.*

*Кимоно тăхăннă Садако çине пăхнă чухне куççуле чараймарăм. Мĕн тери хитреччĕ вăл… Ман çине пăхрĕ те: «Мĕншĕн йĕретĕн? Эсĕ маншăн ытлашшипех тăрăшатăн...» – терĕ. <…>*

*Садако! Итле-ха! Эсĕ юлташусен миршĕн чĕнекен хăватлă сассисене илтетĕн-и? Вун икĕ çул çурăра çут тĕнчерен уйрăлнă ача амăшĕ пек эпĕ Японири кăна мар, пĕтĕм тĕнчери амăшĕсене чĕнсе калатăп. Çакăн пек хăрушлăх тек ан пултăрччĕ! Мĕн чул ача миршĕн вĕт-ха…»*



**Вырсларан Лариса ПЕТРОВА куçарнă.**

ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ

# Пăши



Чи пысăк та вăйлă чĕр чунсенчен пĕри – пăши. Вăл вăрманта пурăнать. Хăш чухне вĕсене хула хĕррине е паркра курма пулать.

Çӳллĕшĕпе те, йывăрăшĕпе те пăши килти ĕне пекех. Хăйне тапăнакан чĕр чунсенчен хăватлă мăйракипе тата шĕвĕр чĕрнеллĕ урисемпе тапса хӳтĕленет. Апла пулсан та кашкăрсемпе упасем пăшие тытма хăрамаççĕ.

Пăшин куçĕ япăх курать, анчах та хăлхи питĕ сивĕч. Çил вĕрекен енчен килекенсене тӳрех илтет, тепĕр енчен пырса юнашар тăракансене сисмест.

Пăшисем кĕтĕвĕн пайланса та, пĕчченшерĕн те пурăнаççĕ. Çуркунне вĕсен кĕтĕвĕ саланать, пăрушĕсем те çур кунĕсенчех çуралаççĕ. Пĕчĕкскерсем малтанлăха вăрăм та çинçешке уралла, сутă хĕрлемес тĕслĕ. Çӳллĕ урисене пулах вĕсем пĕшкĕнсе ешĕл курăка çиеймеççĕ, хурăнпа çăка хунавĕсемпе çулçисене вара çăмăллăнах карăнса кăшлама пултараççĕ.

Пăрушĕсем амăшĕн сĕчĕпе тăранаççĕ, пăши сĕчĕ ĕненнинчен çулăрах пулнипе «ачисем» хăвăрт çитĕнеççĕ.

Курăк-чечек, йывăç çулçи, мăк, кăмпа çиеççĕ вĕсем. Çу кунĕсенче вăрманта апат çителĕклĕ, хĕлле вара вăл енчен йывăртарах килет чĕр чунсене. Йывăç хуппипе тураттисене кăшланипех тăранма тивет. Шартлама сивĕсенче ăшăнмашкăн пăшисем юр айне пытанаççĕ, сисĕмлĕ хăлхисем çеç тавралăха тимлеме локатор пек çиелте юлаççĕ.

# Интернет историйĕ

Интернет 1970-мĕш çултан пуçланса кайнă темелле. Шăп çав тапхăрта пĕчĕк "тетелсене" пухса тĕнчипе сарăлакан пĕр "серепе" тума шут тытнă. Унччен электрон "тетелсем" наука центрĕсенче çеç пулнă. Вĕсем информаци ылмашăвне самай хăвăртлатнă.

Халĕ Интернет чи пысăк информаци пухăвĕн архивĕ шутланать, унпа кашни ирĕклĕнех усă курса тем çинчен те пĕлме пултарать.

1996 çулта Интернетпа пĕр тăтăш 45 миллион çын усă курнă пулсан, тепĕр ултă çултан "тетелте" ларакансен йышĕ вун икĕ хут ӳснĕ – 544 миллиона çитнĕ.

Чи пысăк Интернет-кафе 2000 çулта чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕнче Нью-Йоркра уçăлать. Унта пĕтĕмпе 628 компьютер лартнă.

Интернет мелĕпе иртекен интервьюпа Пол Маккартни юрăçă палăрнă. Онлайнтрансляци вăхăтĕнче ун патне 3 миллион ыйту килнĕ, анчах юрăç 200-шне çеç хуравланă.

Интернетпа усă куракансен йышĕпе мала тухнăшăн Финляндие Гиннес рекорчĕсен кĕнекине кĕртнĕ.

Тĕнчери пĕрремĕш веб-камерăна Англире, Кембридж университетĕнчи компьютер лабораторийĕнче 1991 çулта шухăшласа кăларнă, хута янă.

Чи паллă "тетелсенчен" пĕри – "ВКонтакте". Унта регистрациленнĕ çынсен страницисене пăхса тухма 1000 çула яхăн кирлĕ пулать.

Интернетпа усă куракансем вăтамран та 33 çулта тесе палăртнă.

Германири хăна çурчĕсенче кашнинчех тӳлевсĕр WiFi пур.

Авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шывра Интернет кунне паллă тăваççĕ.

Тĕнчипе те социаллă "тетелсенче" пĕр миллиард çын ытла ларать.

1964 çулта Дуг Энжелбарт компьютер "шăшине" шухăшласа кăларнă. Тĕлĕнмелле те, анчах вăл йывăçран пулнă.

@ – çак Интернет символне кашни халăх хăйĕнле ăнланать, курать. Тĕслĕхрен: серб халăхĕ ăна "ăсран тухнă "А" сас палли" тет, туркăсем "кĕл чечек" теççĕ. Голланди çыннисем ăна "упăте хӳри" пек кураççĕ, акăлчансемпе французсем çак символа "шуй" тесе калаççĕ, Чехире "сельдь пулă", пирĕн çĕр-шывра вара "йытă" теççĕ.

**Нина ЦАРЫГИНА пухса хатĕрленĕ.**

# Салтак пурнăçĕ

## Калав

Геннадий ЭСЕКЕЛ

***(Малалли. Пуçламăшĕ 4, 5-мĕш номерсенче).***

Тепĕр кун пуçланчĕ...

«Подъем!» – кăшкăрчĕç ирхи ултă сехетре. Взвод командирĕн çумĕ Бойко аслă сержант, эпĕ лекнĕ взвод командирĕпе Марценюкпа паллаштарчĕ. Взводра вăтăр çамрăк. Кашнин хушаматне чĕнсен строй умне тухмаллине пĕлтерчĕ. Марценюк лейтенант кашни салтак умне пырса хуп-хура куçĕпе шăтарасла витĕр пăхса тухрĕ. Хура кăтра çÿçлĕ яштака, кĕрнеклĕ офицер. Мăйăх вырăнне икĕ пăнчă сухал хăварнă. Тĕлĕнмелле хитре ар çын.

Çăвăнма кайиччен взвод командирĕн çумĕ Бойко пире шăрпăк пĕрчи çунса пĕтиччен хывăнса выртма команда пачĕ. Çавăн пекех тăрса та тумланма ĕлкĕрмелле. Ăна вăл пĕр вунă хут тутарттарчĕ. Кашнин пулсах пĕтмест. Ирĕн- касăн тума лекет çак «путише» мĕн хăнăхиччен. Хамăра тирпейлерĕмĕр. Апата илсе кайрĕç. Унта та хăвăртлăх кирлĕ. Пĕçерет-и, час çиме хăнăхман-и – сана никам та кĕтмест. Вăхăтра апатланса строя тăмалла. Маншăн ку пулăм чĕр нушаччĕ. Хăнăхман. Выçă юлас мар тесен апата васкавлăн çисе строя тухмалла. Чей ĕçме панă сахăра та тепĕр чухне кĕсьене чикетĕн.

Сакăр сехетре плац çине илсе тухрĕç. Аслă командирсемпе паллашрăмăр. Тепĕр икĕ взвод килсе çитнĕ.

Расписанипе медицина урокĕсем пулмалла. Пĕрремĕш урок – этем кĕлеткине тишкерни. Кашни шăмă ятне латинла пĕлмелле. Çак сехетсене подполковник, вăрçă ветеранĕ иртерет. Фармакологие – майор, паразитологие – капитан... Физвоспитание – хамăр взвод командирĕ Марценюк. Малтанхи урокрах вăл пире кашни ирхине стадион тавра виçĕ çухрăм, шăмат кунпа вырсарни кун сывăхри вăрманпа тата шоссе çулĕпе вуншар çухрăм чупассине каласа хучĕ. Кăна илтсен пурин те пуçĕ усăнчĕ.

– Вĕренÿ курсĕ пĕтиччен сирĕнтен спортсмен тăватăпах. Эсир тăрăшнипе хам капитан званийĕ илетĕп, паллах, – вăл рехетленсе лĕх-лĕх кулса илчĕ.

– Пуçланчĕ чăн-чăн салтак пурнăçĕ, – пĕтĕмлетрĕç тин çеç çар ретне тăнисем.

Вĕренÿ маншăн ытла йывăр килмерĕ. Ветеринари техникумĕ нумай пулăшрĕ. Ялта ÿснĕ çамрăксемшĕн физкультура та темех мар. Волгоград, Харьков хулисенчен темиçе çамрăкчĕ. Амăш çумĕнчен тин хăпнă ачаш та черченкĕ яшсемччĕ. Вĕсемшĕн тĕрлĕ снаряд çинче хусканусем тăвас ĕç йывăр пыратчĕ. Инçе чупассинчен сехрисем хăпатчĕç. Çитменнине вĕсем пурте çăвартан пирус ямастчĕç. Кая юлакансене взвод командирĕ чăтма пултараймастчĕ, ял ачисемпе танлаштарса намăслантаратчĕ. Хăшĕ-пĕри туртма пăрахрĕ. Десантнике, космонавт пулма хатĕрленĕ пек, тĕрлĕ снаряд çинче кутăн-пуçăн çавăракан хăнăхтарусем тутараççĕ. Сывлăшра çухалса каймалла мар, лăпкăлăха хăнăхмалла. Турник, перекладина, «качака», «лаша» тата вун-вун ытти снаряд пирки каласси те çук.

Нямунас шывăн (Неман) чăнкă çыранĕнчен анаталла канат карăнтарса çирĕплетнĕ. Канат варринче тĕвĕ. Çав канатпа парашютпа сикнĕ чухнехи пек яранса анмалла, паллах, хăвна çирĕп çыхса лартса. Варринчи тĕвĕ десантника кутăн-пуçăн çавăрса чикелентерсе ярать. Çыхăнмасан, вун пилĕк метр çÿллĕшĕнчен персе ансан этем ĕмĕрлĕхех суранланса юлать. Ун пеккисем пулкаланă. Ку канат çулĕ – хăравçăсене хăнăхтармалли меслет. Сăмах май, «Прыжок на заре» кинофильма шăп та лăп 106-мĕш полкра ÿкернĕ. Пирĕн батальон çумĕнчех вăл полк.

Взвод командирĕ Марценюк – чăн-чăн спортсмен. Вăл Каунас педагогика институтĕнче куçăмсăр майпа физкультура уйрăмĕнче вĕренет. Сессисене питĕ юратмастчĕ. Конспектсем, отчетсем, тĕрĕслев ĕçĕсем çырса аппаланмалла. Салтаксемпе кунĕпе казармăра пулнăран ун вăхăчĕ те çитместчĕ. Экзаменсем пуçлансан тарăхмалли тапхăр пуçланатчĕ, пур ĕçе те туса пыма ĕлкĕрейместь. Çапах та майне тупрĕ. Пĕррехинче взвод командирĕпе пĕр дежурствăна лекрĕм. Эпĕ пĕрремĕш постра – ялав умĕнче тăрататăп. Касхи отбой хыççăн пурте çывăраççĕ. Вăл мана:



– Санăн документсене пăхса тухрăм, эсĕ ветеринари техникумĕнче вĕреннине пĕлтĕм, – терĕ пĕр калаçура.

– Çапла, эпĕ кăçал çуркунне диплом илтĕм, – тетĕп. Манран мĕн шахвăртасшăн-ши тесе сисчĕвлентĕм.

– Эсир унта политэкономи предметне те вĕреннĕ пулмалла, – шăтарасла пăралать вăл мана хурлăхан çырли пек хура куçĕпе. Ун гипнозла куçĕнчен пăрăнаймасăр:

– Вĕреннĕ, – тетĕп.

Ун сăн-пичĕ хавас сăнпа тулчĕ. Манăн та чун шуйханăвĕ иртрĕ. Лăплантăм.

– Эпĕ сана халех политэкономи кĕнекипе тетрадьсене килсе паратăп. Санăн çĕрĕпе конспект çырма тивет. Килĕшетĕн-и?

– Юрать, – терĕм.

– Постра çавах ыйхăпа анраса тăратăр. Капла маншăн усăллă ĕç пулать. Хамăн вăл енĕпе пуç ĕçлемест, – ман çине ытарлăн пăхса илчĕ те çурăмран лăпкаса хăвăрт çухалчĕ.

Полкри хĕрарăмсем уншăн пуçĕсене çухатнине илтме тÿр килнĕччĕ-ха. Вăл çур сехетрен таврăнчĕ. Куçĕсем çиçеççĕ, кăмăлĕ савăк. Тута хĕррине кăштах писев палли юлнă.

– Тĕрĕслевпе килмерĕç-и? – ыйтрĕ вăл çаплах юрату сĕрĕмĕнчен уйрăлайми сăнпа.

– Килмен. Командир юлташ, сирĕн тута хĕрринче хĕрлĕ пăнчă вырнаçнă, унччен сукчĕ, – терĕм.

Вăл ăна хăвăрт шăлса илчĕ те мана куç хĕсрĕ.

– Никама та ан шарла.

Мана кĕнекепе тетрадь тыттарчĕ.

– Класа кĕрсе лар та çырма пуçла. Ыйтусем уйрăм хут çинче. Тĕрĕслевччен хам хуралтатăп. Вăл килессе пĕлсен сана систеретĕп. Тумбочка умне хăвăрт пырса тăратăн. Килĕшрĕмĕр?

«Лекрĕм иккен танатана... Ма каларăм-ха вĕреннĕ тесе. Халь кашни кас ун конспекчĕсене «шĕкĕлчесе» ларма тивет. Кăнтăрла пуринпе те пĕрле занятисенче пулмалла. Ĕлкĕр кăна».

Класа кĕрсе çырма пуçăнтăм... Нарядран тухсан хатĕр конспекта института кайса памалла.

– Лайăх, пахалăхлă çырнă пултăр, начарришĕн касару çук, – кулса илчĕ вăл хура кăтра çÿçне шуххăн силлесе. Сăмси айĕнчи икĕ пăнчăллă мăйăхĕ йăлт-ялт вылянчĕ. – Бойко сержанта асăрхаттарнă, пĕлет – сана нимĕнле наряда та çырмасть. Пирĕн взводра наряда чухне эсĕ кăнтăрла каптеркăра çывăратăн. Тăрăш, эпĕ сан вырăнна ялав умне тăратăп.

Çĕрĕпе пуçа ватса лартăм. Çырса пĕтерсен тепĕр хут вуласа пăхрăм. Самай пулăхлă пек туйăнчĕ. Хăйне аллинчен тыттартăм. Шутсăр çывăрас килет. Ывăннă.

«Подъем!» – янăрарĕ казармăра. Кĕшĕлтетÿ пуçланчĕ. Мана улăштарчĕç. Паян вырсарни кун. Ирĕклĕ вăхăт. Эпĕ çывăрма уттартăм. Тинех кайрĕ ман пурнăç! Уйрăмах взвод командирĕн, Марценюкăн сессисем пуçланас умĕн. Çĕрлесенче çыратăп, кăнтăрла çывăратăп. Мана вăл чăннипех çăварлăхларĕ. Политэкономи çумне биологи, хими, литература предмечĕсен конспекчĕсем хутшăнчĕç. Унăн ĕçĕсене пăхса тухнă преподавательсем «лайăх», «питĕ лайăх» паллăсем лартнине мана пĕлтерет. Ача пек савăнать хăй. Мана тав туса кашни эрнере увольнительнăй тыттарать. Взводри туссем кĕвĕçсе пуçларĕç. Уйрăмах Сухопар. Вăл Бойко сержантпа Украинăри пĕр районтан иккен. Бойко сержант та сивĕ куçпа пăхать. Мĕншĕн тесен Марценюк Бойкăна Никифоров рядовоя нимĕнле наряд та ямалла маррине каласах тăрать. «Çав чăваш ачине мĕн пирки «çăмăллăх» памалла?!» Тĕлĕнет вăл, хирĕнет, чунтан кĕвĕçет.

– Эпĕ каланă, эсĕ пурнăçла!

Ку Марценюкăн татăклă сăмахĕ.

Паллах, конспектсем, рефератсем хатĕрлемен вăхăтра Бойко мана çавах ăçта та пулсан наряда чиксе хурать. Эпĕ хам та хирĕç мар. Намăс-симĕс пулмаллах этемĕн. Ыттисенчен те аван мар. Ялан «любимец» вырăнĕнче пулни лайăх-и вара? Марценюк хăйне кирлĕ вăхăтра Бойко мана наряда çырсанах Бойкăна увольнительнăйсăр хăварать. Вара Бойко çилли ман çине ÿкет.

Пысăк уявсене кĕтсе илме батальонра кашни взводăн темиçе номер концерт хатĕрлемелле. Пирĕн йышра пултаруллă çамрăксем тупăнчĕç. Ленинград çамрăкĕ – аккордеонист, Ĕпхÿ каччи – маçтăр ташăçă тата икĕ вырăс каччи те ташша ăста. Харьковри Леня Маршакпа Лифшиц – шÿт ăстисем. Еврей каччисем. Иккĕн, висçĕн, пĕччен юрлакансем. Вĕсен йышĕнче эпĕ те пултăм. Марценюк савăнăçне нисчта шăнăçтараймасть. Талантсем пур унăн взводĕнче! Ытти взвод командирĕсем те ăмсанаççĕ ăна. Марценюк вĕсен умĕнче мухтанать: «Эпĕ вĕсенчен спортсмен тăватăп! Вĕренÿ курсĕ пĕтсен «4»-па «5»-лĕклĕх экзамен парсан эп капитан звани илетĕп...» лешсем йĕкĕлтесе кулаççĕ.

Батальонра эстрада ушкăнĕ йĕркелерĕç. Каунасри вăтам училищĕсенче концертсем пама пуçларăмăр. Питĕ ăшшăн кĕтсе илеççĕ çамрăксем. Заводсенче ĕçлекенсем те хавас пире.

Педагогика институтĕнче концерт пырать. Салтаксен пултарулăхĕпе студентсем кăна мар, преподавательсем те кăсăкланса паллашаççĕ. Темиçе номер хыççăн манăн юрлама тухмалла. Кăмăл тăван ялти пĕлĕшсен лару-тăрăвне пула пăтранчăк. Эдита Пьеха репертуарĕнчи «Будет солнце или буря, мы с тобою навсегда» юррăн пĕрремĕш çаврăмне чиперех юрлама тытăнтăм. Зала пăхса илтĕм – унта ларакан çамрăк хĕрсем мана куç хĕсеççĕ, аллисемпе «чуппа» вĕçтереççĕ тата темĕнле те астараççĕ. Эп çакна курсан çухалсах кайрăм. Иккĕмĕш çаврăма юрлама нимĕнле те пуçлаймастăп – сăмахĕсене мансах кайрăм. Аккордеонист икĕ хутчен кĕвве выляса иртерчĕ. Çаплах сăмахĕсем пуçа килмеççĕ. Тарăхса кайрăм. Мĕн тери намăс! Таçтан-муртан пуçа «Пирĕн урам анаталла» чăваш юрри пырса кĕчĕ. Вăл пирĕн Тăхăрьял чăвашĕсен салтак юррин сăмахĕсем шутланатчĕç. Ăна Федор Павлов композитор урăхла кĕвĕ туса майлаштарнă. Ритмика та шăпах унпа пĕр килет. Бурчик аккордеониста паллă парса систертĕм. Вăл тепĕр хут проигрыш выляса ячĕ, эпĕ чăвашла юрлама пуçларăм. Юрă вĕçленсен куракансем: «Браво! Бис!» тесе кăшкăрма пуçларĕç. Манăн вĕсен кăмăлне тивĕçтерсе тепĕр хутчен юрлама тиврĕ. Чаршав хысне тухсан Бурчик манран тĕлĕнсе:

– Эсĕ мĕнле ют чĕлхепе юрларăн вара? – тесе ыйтрĕ.

– Чăвашла юрларăм, – тетĕп.

– Малашне те яланах çакăн пек юрла. Куртăн-и сана мĕнле юратаççĕ, – ырларĕ хайхискер.

Концерт хыççăн çур сехетлĕх ташлама ирĕк пачĕç. Литва хĕрĕсем питĕ чипер. Вĕсем çÿллĕ, пирĕн салтаксем лутрарах. Ман ума пырса тăнă тăватă-пилĕк хĕртен пĕринпе, хам çÿллĕшшипе, ташă çаврăмне тухрăм... Кăмăл усăлчĕ.

Каунаса килнĕренпе пире пуçласа сăн ÿкерттерме фотоательене илсе кайрĕç. Фотографа пулăшаканни – Литва пики. Вăл вăтăр салтака сăнран тĕсесе пăхрĕ те ман ума пырса хăйсен чĕлхипе тем каларĕ. Паллах, эпĕ нимĕн те ăнланмарăм.

– Эпĕ Литва чĕлхине пĕлместĕп, – хуравларăм вырăсла.

– Касарăр, сире эпĕ литовец тесе шутларăм, эсир пирĕн халăх сăнлă. Хăш наци çынни эс?

– Чăваш, – тетĕп.

– Апла ларăр ни малтан. Ыттисене кăшт каярах чĕнетĕп.

Илтнĕччĕ-ха вĕсем çине урăхларах пăхнине. Акă чăн тĕслĕх. Хулана увольнение тухсан пĕччен çÿреме юраманни çинчен командирсем тăтăшах ас тутараççĕ.

– Хура погонлисем пурте Кавказпа Ази тăрăхĕнчен килнĕ çамрăксем. Вĕсене увольнение аван кураттăмăр. Пĕччен шĕрĕн те, ушкăнпа çÿреççĕ. Кăшт тирпейсĕртерехчĕ çав хайхискерсем. Пирĕн десантниксем çÿллĕ те тĕреклĕ, тумĕ те тирпейлĕ. Лешсем вырăсла ыйтсан та: «Ни супранто» («Не понимаю») теççĕ те пăрăнаççĕ. Е ăçта та пулсан кĕрсе çухалаççĕ. Вырăс каччисем ытларах чухне манпа çÿреме тăрăшатчĕç. Эп чăвашла ыйтсан та самантрах тупса пама пултаратчĕç. Паллах, тепĕр хутчен вырăсла ыйтма тиветчĕ.

Салтаксене увольнение хулана ярас чухне офицерсем питĕ çирĕп асăрхаттараççĕ: «Хула хĕрринчи пĕр вырăна кайма тăрăшмалла мар. Унта юрату шыракан чысне çухатнă хĕрсем пухăнаççĕ. Уйрăмах десантниксем çумне сăпса пек сырăнаççĕ...»

Манăн темиçе хутчен те тĕрĕслевпе пропуск пунктĕнче дежурствăра пулма тÿр килчĕ. Ку вăл çар хулине кĕмелли вырăн. Пирĕн хулара десантниксемсĕр пуçне ыттисем те пурччĕ. Хуларан хитре хĕрсем килсе салтаксене чĕнтерсе кăларма ыйтатчĕç...

Çапла хĕл касрăмăр. Балтика тăрăхĕнчи хĕл пирĕн енчи пек пит-куçа ытлах хыпалаттармасть. Çуркунне çитрĕ. Служба ерипен пырать. Темиçе те парашютпа сикрĕмĕр. Вăрманти юр ирĕлсе пĕтиччен тепĕр хутчен Гайжюнай хули çывăхĕнче сикмелле иккен. Вăрман варринчи пысăк уçланкăра самолета ларма кĕтсе тăратпăр. Çанталăк пăсăлса кайрĕ. Урăм-сурăм çил, юр çаврăттарать. Сикме чармалли приказ çук. Тĕрĕслев сикĕвĕ тума тăхăр çĕр хутчен сывлăшра ярăннă десантник-майор АН-2 самолета ларчĕ. Аран вĕçсе хăпарчĕ. Пĕр çаврăм хыççăн уçланкă варринче сиксе юлчĕ. Алхасакан çил, вĕçтеркен юр çаплах лăпланмасть. Майор десантниксем тăракан вырăнтан чылай инçете анса ларни хăрушла пулăм патне илсе çитерчĕ...

**(Малалли çитес номерте).**

# Хавасла 2014 самант

## Шыракан – тупать

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| К | А | Т | П | А | Р | С |
| Ф | О | Н | Л | Е | Т | Е |
| Р | А | П | А | Н | К | Ă |
| В | А | Р | К | А | Т | Ь |
| И | Р | А | Н | С | Ц | Е |
| А | Н | И | З | Д | Р | Е |
| А | Т | Р | Т | К | Т | А |

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | |
| | | | | | | |
| | | | | | | |
| К | Р | А | В | А | Т | Ь |
| | | | | | | |
| | | | | | | |
| | | | | | | |

Çак тăваткăлти сăмахсем арпашăнса кайнă-мĕн. Çавăнпа та, çăмăлрах пултăр тесе, тĕслĕх вырăнне пĕрне илсе кăтартрăмăр. Ыттисене вара хăвăрăн тупма тăрăшмалла. Тĕрĕс тĕк, диагональсем урлă тата икĕ сăмах тупăнать.

Йĕкĕрешлĕ сăмах
каçмăш,
Хăйне евĕрлĕ
пуç ватмăш.
Хăш хурав
ăçта вырнаçнă,
Ыйтупа вăл
йăлт пытаннă...



1. Вăрçăра паттăра тухнă салтак. «Каштанка» калав авторĕ. 2. «Хĕрлĕ автан». Ăна нуша çитерет. 3. Сĕтел-... Тепĕр чух унпа çынна кăнтăрла шырасан та тупаймăн. 4. Çурхи вĕçен кайăк. Пулă. 5. Килти мăр-мăр. Мăйăх мар. 6. Йывăç пайĕ. Яшка пĕçермелли савăт. 7. Пахча çимĕç. Чĕр чун. 8. Хими элеменчĕ. Икĕ çырана çыхăнтаракан «пăрахут». 9. Çĕнтерĕве чаплăн уявлани. 10. Шкул ачин «арчи». Арменири кӳлĕ.

## Куç умĕнче цифрăсем,
## Шалта вара – сăмахсем...



**Ăнлантарни:** Ку пуç ватмăша шутлама ансат та, кăткăс та. Мĕншĕн тесен хăш-пĕр сас паллисене кăтартнă цифрăсем тăрăх тӳрех партса пыратăн. Çуккисене вара ăнкарса илме тивет. Сас паллисене тĕрĕс тупса лартсан сăмахсем хăйсемех тухса пырасçĕ. Апла тăк, мĕнле калаççĕ-ха: куç хăрать те, алă тăвать... Эппин тытăнса пăхăр-ха. Ăнăçу сунатпăр!

**Сылтăмалла:** 1. Хурт-кăпшанкă. 4. Кĕвĕ жанрĕ. 9. Чĕр чун. 10. Историе юлакан çыравçă. 14. Кинопленка çинчи «çырулăх». 15. Кĕпер тĕсĕ. 16. Разведчикăн азбуки. 19. Шăл йĕртекен. 20. Вырăс физикĕ, академик. 22. Тикĕс мар çĕрти чупу. 23. Кăнтăрти чĕр чун. 29. Нейлон юлташĕ. 30. Темиçе уралла чĕр чун. 32. Ĕлĕк. 33. Кĕвĕ хайлавĕ. 34. Çĕр-шыв тĕрекĕ. 37. Пушă. 38. Ун пуртти яланах катăк. 39. Килти мăр-мăр. 40. Литература жанрĕ.
**Аялалла:** 2. Маçтăр. 3. Çĕмĕрле районĕнчи ял. 5. Тинĕс пулли. 6. Тĕрлĕ халăхсен уйрăмлăхĕ. 7. Карелсен кĕвĕ инструменчĕ. 8. Чăваш халăх артисчĕ – Кĕлпук Мучи. 11. Тапăну. 12. Шкул ачин «арчи». 13. Чăваш сăвăçĕ. 17. Çĕр-шывшăн чунран хыпса çунакан. 18. Çар званийĕ. 21. Итали халăхĕн ташши. 24. Унта тĕрлĕрен тавар упранать. 25. Чиновниксен штачĕ. 26. Вĕренекенĕн сĕтел-пуканĕ. 27. Музыкант. 28. Пĕчĕк кăмака. 31. Пуç çийĕнчи вăрман. 35. Диван çинче хăяккăн выртни. 36. Пулăçăн хатĕрĕ.

## Сăмах каçмăш



## Кашни ыйту – хушамат,
## Пĕл: хурав та – хушамат...



1. Тĕнчери пĕрремĕш космонавт. 2. Вăл водород бомбине шутласа кăларнă. 3. Тахçан çĕр-шыв старости пулнăскер. 4. Пăр çинчи «челюскинецсене» çăлакан. 5. Китай тăрăхне тĕпченĕ чăваш ăсчахĕ. 6. Чăваш халăх артисчĕ – Кĕлпук мучи. 7. Çĕр-шывĕпе паллă хоккеист та, футболист та. 8. Тĕнчипе чапа тухнă штангист – Алексей ... 10. Раççей юрăçи, ытларах романссене килĕштерет. 11. «Кĕт мана, эп таврăнатăп...» йĕркесен авторĕ. 12. Раççей артисчĕ, «Бриллиант алă» фильмра – Андрей ... 13. Сталин ушкăнĕнче ĕçленĕ политик. 14. Тĕнчипех палăрнă вырăс гимнастчĕ. 15. Вырăс киноактерĕ, аксакал, Алексей ... 16. Старшиновпа пĕрле выляна хоккеист. 17. Кĕрешӳçĕ, виçĕ хут Олимп чемпионĕ. 18. Чăваш композиторĕ. 19. «Лăпкă Дон» кĕнеке авторĕ. 20. Çамрăк гвардеец. 21. Чăваш боксерĕ, Олимп чемпионĕ. 22. Раççейĕн пĕрлештернĕ командин футболисчĕ. 23. Çĕр-шывĕпех паллă хоккей тренерĕ. 24. «Пуля – умах, штык – маттур», – тесе каланă çар ертӳçи.

**Сăмах умне е вĕçне,**
**Сас палли хушатăн.**
**Çĕн сăмах пĕлтерĕшне,**

| | | | |
|---|---|---|---|
| | У | Р | А |
| | С | А | Н |
| | Ă | Р | У |
| | П | А | Т |
| | У | П | А |
| | В | А | Л |

**Хыççăн эс вулатăн.**
**Хуравне вара ас ту –**
**Пушă йĕркере эс туп...**

| | | | |
|---|---|---|---|
| З | А | Н | |
| П | И | Р | |
| Т | У | Р | |
| У | Р | А | |
| Х | У | Л | |
| К | Ё | Р | |

*Николай* ***КРАСНОВ*** *(Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ.*